БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
№

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Май
17
ВЫРСАРНИКУН
№ 96 (9005)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕнче. Тăвай районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем тата çул-йĕр работникĕсем 1953 çулхи çул-йĕр ĕçĕсен планне срокчен тултарма Чăваш республикинчи колхозниксемпе çул-йĕр работникĕсене чĕнсе калани çинчен (1 стр.).
Тăвай районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем тата çул-йĕр работникĕсем Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксемпе çул-йĕр работникĕсене чĕнсе калани (1 стр.).
КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ. О. Талля.—Малта пыракан çамрăксене—комсомол ретне (2 стр.).
Н. Владимиров.—Малта пыракан совет наукине.
И. В. Сталин юлташ аслă шкул работникĕсене йышăннă чухне тухса каланăранпа 15 çул çитнĕ тĕле (2 стр.).
Е. Афанасьев.—Хĕрлĕ Чутай районĕнче ялхуçалăх кадрĕсемпе тĕрĕс мар ĕçлеççĕ (2 стр.).
М. Яхонтова.—Анри Барбюс. Çуралнăранпа 80 çул çитнĕ тĕле (3 стр.).
Корейăри ĕçсем (3 стр.).
Корейăра перемири çинчен пыракан калаçусем (3 стр.).
Премьер-министр Черчилль Англири общинăсен палатинче тухса калани (4 стр.).

Çул-йĕр ĕçĕсен çулталăкри планне срокчен тултарар

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕ ССР Союзне 1951—1955 çулсенче аталантармалли пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче автомобиль транспорчĕпе грузсем тата пассажирсем турттарас ĕçе малалла аталантарма, чул сарнă çулсем тăвассине, тăваттăмĕш пилĕкçуллăхрипе танлаштарсан, 50 процент ÿстерме палăртнă.

Автомобиль транспорчĕ пирĕн республикăра та хăвăрт ÿсет. 1952 çулта автомашинăсен паркĕ 10 процент ытла хушăннă. Халĕ кашни предприятире, нумай колхозсенче автомашинăсем пур. Автомобиль транспорчĕ хăвăрт ÿссе пыни çулсене çĕнетсе лайăхлатма хушать. Çулсене автомашинăсем хĕлĕн-çăвĕн, кирек мĕнле çанталăкра та татти-сыпписĕр çÿремелле тăвас пулать.

Правительство çулсерен çĕнĕ çулсем тума, киввисене юсаса лайăхлатма палăртать. Çак ĕçе çул-йĕр органĕсен рабочийĕсемпе тата механизмĕсемпе, çавăн пекех колхозниксен вăйĕпе тăваççĕ. Кашни колхозник тата колхозница çул-йĕр строительствине хутшăнас ĕçе хăйĕн патриотла тивĕçĕ тесе шутлать. Пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем çĕршер километр тăршшĕ паха çул, çĕршер кĕпер тунă. Чылай район центрĕсемпе Шупашкар хушшине чул сарса çул тунă. Тăвай, Сĕнтĕрвăрри, Вăрмар, Куславкка, Канаш, Муркаш тата ытти хăшпĕр районсенчи колхозниксемпе колхозницăсем çул-йĕр строительстви планне çулсерен иртерсе тултараççĕ. Асăннă районсенче чул сарса вуншар километр тăршшĕ паха çул тата кĕперсем чылай тунă, çулсем хĕррине йывăç лартнă.

1952 çулта республика çул-йĕр ĕçĕсен планне 115 процент тултарчĕ. Анчах çакна палăртас пулать: хăшпĕр районсенчи партипе совет организацийĕсем çул-йĕр строительствипе çителĕксĕр интересленеççĕ, ĕççыннисене хăйсен тивĕçне чыслăн пурнăçлама мобилизацилемеççĕ, çул-йĕр органĕсем япăх ĕçленипе килĕнсе пурăнаççĕ.

Шăмăршă, Элĕк, Сĕнтĕр, Вăрнар районĕсем çул-йĕр строительстви планне нумайранпа тултарса пымаççĕ. Çул-йĕр органĕсем пуçарусăр пулнипе тата партипе совет организацийĕсем çул-йĕр ĕçне кирлĕ пек хакламаннипе асăннă районсенче строительство сезонне япăх хатĕрленнĕ.

Çул-йĕр управленийĕ хĕллехи вăхăтра материалсем хатĕрлемелли тата турттарса кăлармалли плана 42 процент çеç, урăхла каласан, пĕлтĕрхинчен сахалтарах тултарнă. Чул, йывăç, хăйăр хатĕрлес тĕлĕшпе уйрăмах Пăрачкав, Советски, Шăмăршă, Йĕпреç, Сĕнтĕр тата Чурачăк районĕсем юлса пыраççĕ. Строительство сезонне çавăн пекех Çĕмĕрлери машинăсемпе çул тăвакан станци (директорĕ Подклетнов юлташ) тата Вăрмарти механизмсемпе чул хатĕрлекен карьер та (директорĕ Михайлов юлташ) япăх хатĕрленнĕ. Материалсем хатĕрлемелли плана тултарманнишĕн тата машинăсемпе çул тăвакан станципе карьер сезона япăх хатĕрленнишĕн Çул-йĕр управленийĕ те (начальникĕ Рунгш юлташ) айăплă.

Çул-йĕр строительствине кирлĕ пек хакламаннине хăвăртрах пĕтермелле. Çул тумалли тата юсамалли çулталăкри плана ăнăçлă тултарма татăклă мерăсем йышăнас пулать. Кашни районăн, ял Совечĕн, колхозăн государство заданине пурнăçлама çеç мар, иртерсе пурнăçлама та мĕн кирли пурте çителĕклĕ. Çул-йĕр органĕсен, ял Совечĕсен тата колхоз руководителĕсен ответлăхне ÿстерни çеç кирлĕ.

Хаçатăн паянхи номерĕнче Тăвай районĕнчи колхозниксемпе çул-йĕр работникĕсем 1953 çулхи çул-йĕр строительстви планне срокчен тата иртерсе тултарассишĕн социализмла ăмăрту анлă сарма республикăри мĕнпур колхозниксемпе çул-йĕр работникĕсене чĕнсе калани пичетленсе тухать.

Çак районти колхозниксемпе çул-йĕр работникĕсем иртнĕ çулхи плана срокчен тата чылай иртерсе тултарчĕç, хĕллехи вăхăтра материалсем нумай хатĕрлерĕç. Ку районти колхозниксемпе çул-йĕр работникĕсем çулталăкри плана срокчен, июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма, пур ĕçе те пысăк пахалăхпа тума пулса социализмла обязательствăсем йышăнчĕç.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕ Тăвай районĕнчи ĕççыннисен патриотла пуçарăвне ырларĕç, райсовет исполкомĕсемпе парти райкомĕсене асăннă районти колхозниксемпе çул-йĕр работникĕсем чĕнсе калание колхозниксемпе çул-йĕр работникĕсен пĕрлехи пухăвĕсенче сÿтсе явассине организацилеме хушрĕç. Строительство планне кашни колхоз, кашни çул-йĕр органĕ енĕпе срокчен тата иртерсе тултарассишĕн социализмла ăмăртăва анлăн сарни кирлĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕ йышăннă тăрăх, 1953 çулхи июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа пур районсенче те ялти вăйпитти çынсем, колхозсен туртăм вăйĕпе автомашинисем çул-йĕр строительствине массăллăн тухас ĕçе организацилемелле. Министрсен Совечĕ кашни районăн çул çинче ĕçлеме çуран çын, лав тата колхозсемпе предприятисен автомашинисене куллĕн мĕн чухлĕ кăлармалли график туса çирĕплетнĕ. Райсовет исполкомĕсемпе ял Совечĕсен çав графика колхозсем мĕнле пурнăçланине куллен тĕрĕслесе тăмалла, ĕç вăйĕпе тата туртăм вăйĕпе тĕрĕс усă курма тăрăшмалла.

Çул-йĕр пайĕсемпе райсовет исполкомĕсен çул çинче ĕçлеме кашни колхоза задани хăвăртрах памалла, строительство валли материалсем турттарма предприятисемпе организацисен автомашинисене хутшăнтарма тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. Машинăсемпе çул тăвакан станцин, çул-йĕр участокĕсен тата Вăрмарти карьерăн механизмĕсене татти-сыпписĕр, тухăçлăн ĕçлеттерес пулать. Кашни механизатор ĕç нормине куллен тултарса тата иртерсе тултартăр, пур ĕçе те пысăк пахалăхпа туса пытăр.

КПСС райкомĕсен тата колхозсенчи парторганизацисен колхозниксем хушшинче массăлла-агитацилле ĕçе анлăн сармалла. Çул çинче ĕçлеме агитаторсем, пропагандистсем уйăрмалла, вĕсене куллен пулăшу памалла. Коммунистсемпе комсомолецсем кирек мĕнле массăлла ĕçе те активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем халĕ те паха çулсем тăвассишĕн, государство планне срокчен тултарассишĕн социализмла ăмăртăва пуçарса пыракансем пулĕç.

Агитаторсем, пропагандистсем, докладчиксем çул-йĕр строительствин халăх хуçалăхĕнчи пĕлтерĕшĕ, совет халăхĕ коммунизм строительствинче тунă çитĕнÿсем, тĕнчери лару-тăру çинчен колхозниксемпе механизаторсене уççăн та тарăннăн каласа пама тивĕçлĕ. Пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхра Атăл çинче Шупашкар гидростанцине тума тытăнмалла. Çак пысăк гидростанцине тума хăватлă механизмсем, машинăсем, материалсем питĕ нумай кирлĕ пулаççĕ. Чугун çулсем тăрăх кÿрсе килекен оборудованипе материалсене паха çулсем, тĕреклĕ кĕперсем пулсан çеç татти-сыпписĕр турттарма май пулать.

Тухăçлă ĕçленĕ хыççăн колхозниксем культурăлла канасшăн, çĕнĕ хаçат-журнал вуласшăн, радио итлесшĕн, спектакльсемпе концертсем курасшăн. Вĕсен çак ыйтăвĕсене тивĕçтерессипе—культурăпа çутĕç органĕсен задачи. Вулав çурчĕсен заведующийĕсен колхозниксем хушшинче культурăлла-массăлла ĕçе анлăн сармалла, бригадăсенче стена хаçачĕсем, боевой листоксем кăларас ĕçе йĕркелемелле, малта пыракансен опычĕпе меслетне пĕтĕçтерме пулăшмалла. Кинофикаци управленийĕн колхозниксене ĕçленĕ вырăнта кинокартинăсем тăтăшах кăтартмалла. Уйрăмах суту-илÿ организацийĕсем умĕнче ответлă задачăсем тăраççĕ. Вĕсен çул çинче ĕçлекен колхозниксем патне промышленность таварĕсемпе апат-çимĕç продукчĕсем илсе пырса сутмалла тăвас пулать.

1953 çулхи çул-йĕр строительстви планне срокчен тата иртерсе тултарассишĕн, пур ĕçе те пысăк пахалăхпа тăвассишĕн районсем, колхозсем тата çул-йĕр органĕсем хушшинче социализмла ăмăртăва анлăн сарар!

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕнче

Тăвай районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем тата çул-йĕр работникĕсем 1953 çулхи çул-йĕр ĕçĕсен планне срокчен тултарма Чăваш республикинчи колхозниксемпе çул-йĕр работникĕсене чĕнсе калани çинчен

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обком секретариачĕ çапла йышăннă:

1. Тăвай районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем тата çул-йĕр работникĕсем 1953 çулхи çул-йĕр ĕçĕсен планне срокчен тата иртерсе тултарассишĕн ăмăртса ĕçлеме Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсене тата çул-йĕр работникĕсене чĕнсе калание ырлас.
2. Райсовет исполкомĕсемпе КПСС райкомĕсене Тăвай районĕнчи колхозниксем, колхозницăсем тата çул-йĕр работникĕсем çул-йĕр строительстви планне срокчен тата иртерсе тултарассишĕн социализмла ăмăртăва тухма чĕнсе калание колхозниксемпе çул-йĕр работникĕсен пĕрлехи пухăвĕсенче анлăн сÿтсе явма тата çул-йĕр строительстви çулталăкри планне пур колхозсем, çул-йĕр участокĕсем тата машинăсемпе çул тăвакан станци енĕпе те тултарассишĕн массăлла социализмла ăмăрту организацилеме хушас.
3. Райсовет исполкомĕсемпе КПСС райкомĕсене июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа колхозниксем çул-йĕр строительствине массăллăн тухас ĕçе организацилеме хушас.
4. КПСС райкомĕсене çул-йĕр строительствинче ĕçлекен колхозниксемпе рабочисем хушшинче агитацилле-массăлла тата культурăлла ĕçсем туса пыма план хатĕрлеме хушас.
5. «Коммунизм ялавĕ» хаçатпа «Советская Чувашия» хаçатсен тата районсенчи хаçатсен редакцийĕсене колхозсем, районсем, çул-йĕр участокĕсем, машинăсемпе çул тăвакан станци тата Вăрмарти механизмсемпе чул хатĕрлекен карьер 1953 çулхи çул-йĕр строительстви планне срокчен тултарассишĕн ăмăртса ĕçленине хаçатсенче анлăн çутатма хушас.
6. «Коммунизм ялавĕ» хаçатпа «Советская Чувашия» хаçатра Хисеп хăми тăвас,—унта çул-йĕр строительствинчи социализмла ăмăртура уйрăмах палăрнă районсен, колхозсен, машинăсемпе çул тăвакан станци тата çул-йĕр участокĕсен ячĕсене çырса хурас.

Тăвай районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем тата çул-йĕр работникĕсем Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксемпе çул-йĕр работникĕсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕ йышăннă историлле решенисемпе тата И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă гениалле произведенийĕпе хавхаланса, совет çыннисем пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана срокчен тултарассишĕн чунтан-чĕререн тăрăшса ĕçлеççĕ, коммунизм строительствинчи çĕнĕ çитĕнÿсем патне шанчăклăн пыраççĕ.

Çул-йĕр строительстви — Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕ халăх хуçалăхне аталантарас тĕлĕшпе кăларса тăратнă пысăк задачăсенчен пĕри. Пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тăрăх автомобильсем çÿремелли чул сарнă çулсем тăвасси, тăваттăмĕш пилĕкçуллăхрипе танлаштарсан, 50 процент ÿсмелле.

Çул-йĕр строительствинче ĕçлесси кашни колхозникăн тата колхозницăн патриотла тивĕçĕ пулса тăчĕ. Тăвай районĕнчи колхозниксем тата çул-йĕр работникĕсем çулсем тумалли плана çулленех иртерсе тултараççĕ.

1952 çулта район çул-йĕр строительстви планне пур кăтартусем енĕпе те иртерсе тултарчĕ. Чул сарса çул тумалли плана 330 процент, кĕпер тумалли плана—165 процент, халăх çул-йĕр ĕçне хутшăнмалли плана — 113 процент тултарнă.

Иртнĕ çулта социализмла ăмăрту анлăн сарăлнипе тунă çитĕнÿсем пире, колхозниксемпе колхозницăсене тата çул-йĕр работникĕсене, кăçал, 1953 çулта, тата лайăхрах та тăрăшарах ĕçлеме, çул-йĕр строительстви планне срокчен тултарма, çулсемпе кĕперсене яланах юсавлă тытма хушаççĕ.

Çавна асра тытса тата ĕçлемелли майсене шутласа пăхса, эпир, Тăвай районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем тата çул-йĕр работникĕсем, 1953 çулхи çул-йĕр ĕçĕсен планне срокчен тултарассишĕн социализмла ăмăртăва хутшăнса, çакăн пек обязательствăсем йышăнатпăр:

1. Çулсемпе кĕперсем çĕнĕрен тумалли тата юсамалли çулталăкри плана 1953 çулхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултармалла, Тăвайпа Канаш хушшинчи çул çине чул сарса çитермелле, июнĕн 25-мĕшĕ тĕлне планран иртерсе чул сарса 0,5 километр тăршшĕ çул тумалла.
2. Августăн 1-мĕшĕччен ялсемпе ялсем хушшинчи кĕперсене юсаса пĕтермелле, кирлĕ вырăнта çĕнĕ кĕперсем тумалла.
3. Ялти вăй-питти çынсене çул-йĕр ĕçне хутшăнтармалли плана пур колхозсем енĕпе те 1953 çулхи августăн 1-мĕшĕччен тултармалла.
4. Çул-йĕр ĕçĕнче ĕç тухăçлăхне планпа палăртнинчен 10 процент ÿстермелле.
5. Çул-йĕр ĕçĕсен хакне планпа палăртнинчен 5 процент йÿнетмелле.
6. Кĕперсем тунă тата юсанă çĕрте тимĕрпе пăта 5 процентран кая мар перекетлемелле.
7. Пур ĕçе те питĕ лайăх тумалла, — тунă ĕçсене республикăри комисси «лайăх» паллăран кая мар хак парса йышăнмалла пултăр.
8. Тырă вырма тата государствăна тырă пама тытăниччен çулсемпе кĕперсене пурне те юсамалла, вĕсене пĕрмаях лайăх тытса усрамалла.

Эпир республикăри мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, мĕнпур районсенче тата çул-йĕр участокĕсемпе машинăсемпе çул тăвакан станцире ĕçлекенсене 1953 çулхи çул-йĕр ĕçĕсен планне срокчен тултарассишĕн, пур ĕçе те паха тăвассишĕн социализмла ăмăртăва хутшăнма чĕнетпĕр.

Чăваш республикин пĕтĕм территорийĕнче паха, кăтартуллă çулсем тăвар, çулсене лайăх пăхса усрар!

ЧĔНСЕ КАЛАНИНЕ ТĂВАЙ РАЙОНĔНЧИ КОЛХОЗНИКСЕН ПĔРЛЕХИ ПУХĂВĔСЕНЧЕ ТАТА ÇУЛ-ЙĔР РАБОТНИКĔСЕН АКТИВĔПЕ КОЛХОЗНИКСЕН КАНАШЛĂВĔНЧЕ ЙЫШĂННĂ.

Квартал планне иртерсе тултарнă

ÇĔРПУ. Кăшаркасси ял Советĕнчи ĕççыннисем колхоз производствинче пысăк активлăхпа ĕçлеççĕ. Вĕсем государство умĕнчи хăйсен чыслă тивĕçне лайăх ăнланаççĕ, укçа-тенкĕ парăмĕсене яланах срокчен парса татма тăрăшаççĕ.

Ĕççыннисен политикăлла активлăхĕ пысăк. Кунта ял çыннисем валли час-часах лекцисемпе докладсем тата каласусем иртереççĕ. Ку ĕçре уйрăммăнах ял Советĕнчи бюджетпа финанс комисси председателĕ М. Николаева депутат, П. Яковлев, Г. Дмитриев, А. Андреев, А. Алексеева учительсем тата колхозри коммунистсемпе комсомолецсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Халăх хушшинче политикăлла-массăлла ĕçе куллен туса пынă май Кăшаркасси ял Совечĕ кăçалхи II-мĕш кварталти финанс планне майăн 10-мĕшĕ тĕлне 102 процент тултарчĕ.

С. ЧЕРНОВ.

Ответлăха туйса ĕçлемен çĕрте

Чкаловски районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз руководителĕсем çавăнăçусăр тата кивĕлле меслетпе ĕçленине пула, сурхи ĕçсене чăтма çук вăрăма тăсса ячĕç. Колхозăн пурĕ 636 гектар çурхи тырăсемпе нумай çул ÿсекен курăксем тата силос культурисем акса хăвармалла. Майăн 15-мĕшĕ тĕлне пурĕ те 300 гектар кăна акнă. Уйрăмах сĕлĕ, нумай çул ÿсекен курăксем акассипе кая юлнă. Силослăх курăксем акма вара халĕ те пуçăнман.

Колхоз председателĕпе агроном тата уй-хир бригадисен бригадирĕсем çураки ĕçĕсене кирлĕ пек ертсе пымаççĕ, ака-суха ĕçне агротехникăна пăсса туни вĕсене пĕрре те хумхантармасть. Трактор сеялкисемпе акнă лаптăксен кĕтессисенче чылай шăйрăксем хăварнă, анчах вĕсене тÿрлетсе тухман.

Сеялкăсемпе акнă чухне вăрлăх тăпра ăшне лайăх вырнасса юлман тĕслĕхсем нумай. И. Харитонов юлташ ертсе пыракан 2-мĕш уй-хир бригадинчи А. Колосовпа А. Плотников сеяльщиксем тулă акнă чухне шăйрăксем нумай хăварнă, вăрлăх тăпрапа витĕнсе юлман, вырăнĕ-вырăнĕпе купан-купан акса хăварнă. Çакăн пек япăх ĕçленине вăхăтра тÿрлетсе пымаççĕ.

Колхоз çуракинче юлса пынăшăн МТС руководителĕсем те айăплă. Вĕсем трактор бригадисен ĕçне тĕрĕслемеççĕ. Колхозра ĕçлекен трактор бригади (бригадирĕ Е. Зимцов юлташ) çурхи ĕçсене тума халĕ те тивĕçлипе пуçăнман. Кунта тракторсене икĕ сменăпа ĕçлеттермеççĕ. Механизаторсем ĕç нормисене тултараймаççĕ. Тракторсемпе кун каçа 2,5—3 гектар кăна сухалаççĕ. Çак трактор бригадинчи механизаторсемех «Герой» колхозра та япăх ĕçлеççĕ. 28-мĕш номерлĕ «СТЗ-НАТИ» трактора япăх юсанă пулнă. Унпа 8 талăк хушшинче пурĕ те 15 гектар çеç сухаланă.

Колхоз правленийĕсем те трактористсене пĕр чăрмавсăр ĕçлеме кирлĕ условисем туса паман.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци (секретарĕ Н. Степанов юлташ) çуракинче ĕçлекенсем хушшинче агитацилле-массăлла ĕçе организацилемен. Çурхи ĕçсем пуçланнăранпа уй-хир бригадисенче боевой листоксем пачах кăларман. Стена хаçачĕ те вăхăтра тухса тăмасть, кăтарту хăми йĕркелемен.

В. КУЗНЕЦОВ.

Ирхи çĕртме тăваççĕ

ВĂРНАР. 11-мĕш трактор бригадинчи механизаторсем Жданов ячĕпе тăракан колхозра çураки ĕçĕсене ăнăçлă вĕçлерĕç. Халĕ бригада колхоз уй-хирĕнче ирхи çĕртме тăвать. Тракторсемпе пурĕ 540 гектар ирхи çĕртме сухи тумалла. Çак ĕçе бригада, пур тракторсемпе те икĕ сменăпа ĕçлесе, июнĕн 5-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех пурнăçлама сăмах панă.

Н. МИХАЙЛОВ.

Выльăх апачĕшĕн халĕ кĕрешмелле

ÇĔРПУ. Районти чылай колхозсем иртнĕ хĕлте обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат çитмен пирки пысăк йывăрлăхсем тÿсрĕç. Фермăсенче çамрăк выльăхсем вилнипе колхозсем пысăк сиен кураççĕ. Чылай колхозсенче фермăри ĕнесенчен кăçалхи пĕрремĕш кварталта, иртнĕ çулти çав вăхăтпа танлаштарсан, сахалрах сĕт суса илнĕ.

Иртнĕ хĕлте пысăк йывăрлăхсем тÿссе иртернине тата нумай выльăх сухатнине асра тытса, колхозсем кăçал выльăх апачĕ акса тăвасси çине нихçанхинчен хытăрах пăхассине кĕтмелле ĕнтĕ. Анчах районта выльăх апачĕшĕн çине тăрса кĕрешни курăнмасть-ха.

Парти райкомĕ май уйăхĕн пирвайхи кунĕсенче колхозсенчи пуçламăш парторганизацисене, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕ «Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхозăн обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлес ĕçри опычĕ çинчен» йышăннă постановление колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса пама хушса, ятарласа хут янă.

Колхоз председателĕсемпе парторганизаци секретарĕсене «Гвардеец» колхозри новаторсен паха опычĕпе анлăн усă курас, выльăх апачĕн çирĕп никĕсне тăвас тĕлĕшпе ĕçлеме кăтарту панă. Анчах çак кăтартăва вырăнсенче мĕнле пурнăçланине тĕрĕслени çук.

Шверник ячĕпе тăракан колхозра выльăх апачĕ хатĕрлеме ятарласа бригада тунă, бригадирĕ пулма Романов колхозника уйăрса лартнă. Бригада майăн 11-мĕшĕ тĕлне 4 гектар выльăх кăшманĕ, 3 гектар силослăх хĕвелçаврăнăш, 12 гектар пĕр çулхи курăксем акнă тата 4 гектар çинче çĕрулми лартать.

— Эсир выльăх апачĕсене уйрăм культурăсем тăрăх гектар пуçне миçе центнер туса илме обязательство йышăнтăр? — ыйтрĕ райком секретарĕ Чернов юлташ колхозри бригадиртан.

— Çĕрулми 140-шер центнер туса илмелле тенĕччĕ никак, ыттисене астумастăп, — терĕ Романов юлташ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕ «Гвардеец» колхоз опычĕ çинчен йышăннă постановленипе хăй мĕнле паллашни çинчен ыйтсан, Романов юлташ тĕлĕнсе пăхрĕ.

— Ун пек постановлени çинчен мана никам та пĕлтермен-çке? — хумханса ыйтрĕ вăл.

— Мĕн пирĕнтен ыйтмалли пур,—сăмах хушрĕ тепĕр юлташ.—Тÿррипе каласан, ăна пирĕн председатель Прокопьев юлташ хăй те вуламан...

Шверник ячĕпе тăракан колхозра обществăлла выльăх-чĕрлĕх шучĕпе тухăçлăхне ÿстерме халиччен мĕн чухлĕ тăрăшнине çак цифрăсем те лайăх çирĕплетсе параççĕ. 1952 çулта выльăх-чĕрлĕхрен 12 пин тенкĕ ытларах çеç тупăш курнă. Кăçал 22 сысна аминчен пурĕ те 17 çура кăна илнĕ. Сăлтавĕ пĕрре: выльăхсене зоотехника хушнă пек пăхса усрама сĕтеклĕ апатсем çитмеççĕ.

Романов бригадирăн лайăх ĕçлес туртăм пур. «Гвардеец» колхозра выльăх апачĕ тумалли культурăсене мĕнле акса хăварнипе тата пăхса ÿстернипе кĕсекен паллашнă хыççăнах, вăл çав опытсене хăйсен колхозĕнче те ĕçе кĕртме май пуррине шутласа пачĕ. Анчах вăл çамрăк бригадир, ăна вĕрентекен, куллен ăс паракан çук. Калаçура çакă курăнчĕ: Романов юлташ симĕс конвейер мĕн пулнине те уçăмлăн пĕлмест.

Районти ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ Капитонов, МТС-ăн колхозсенче выльăх апачĕ акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен агрономĕ Белоусов юлташсем каланă тăрăх, районти колхозсем кăçал выльăх апачĕ валли акмалли плана тултараççех. Пур тĕрлĕ культурăсен вăрлăхĕсене тупса çитернĕ, акмалли участоксем уйăрса хунă.

Акмалли плана тултарĕç, анчах мĕнле срокра тата мĕнле пахалăхпа? 1952 çулта районти уйрăм колхозсенче выльăх кăшманне питĕ кая юлса акнă тата начар пăхнă пирки çав хаклă культурăна пĕр центнер та пухса кĕртейменнине ялхуçалăх пайĕнчи работниксем ытла та час манаççĕ.

Колхозниксене «Гвардеец» колхозри новаторсен опычĕпе тĕплĕн паллаштарасси тата çав опытпа усă курма пысăк чăтăмлăхпа вĕрентесси ялхуçалăх специалисчĕсен тивĕçĕ. Анчах çав лайăх опыт çинчен пропаганда тăвас ĕçе кунта ытлашши ĕç вырăнне хураççĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕ хăйсен постановленийĕнче «Гвардеец» колхозри симĕс конвейер» ятлă кĕнекене пур колхозсене те çитерме, ăна лайăх тĕпчесе вĕренме кăтарту пачĕç. Районти 7—8 колхозра пултăмăр, анчах нихăшĕнче те председательсем ун пек кĕнеке курман. Ахальтен мар ĕнтĕ, хăшпĕр колхозсенче Министрсен Совечĕпе парти обкомĕ йышăннă постановление ячĕшĕн сÿтсе яваççĕ те, мĕнпур ĕçе çавăнпа иртерсе яраççĕ.

— Вăл постановление эпир правленисенче сÿтсе яврăмăр, — тет «Красный Октябрь» колхоз председателĕ Иванов юлташ.

— «Гвардеец» колхозран пример илсе кăçал çĕнĕрен мĕнле ĕçсем туса иртерме шутлатăр?

— Çуракине лайăх иртерме йышăнтăмăр, унтан... — шутласа ларчĕ Иванов юлташ, выльăхсене хирте кĕтсе çÿреме шанчăклă кĕтÿçĕсем тытрăмăр...

Ку колхозра кăçал 35 гектар çинче çĕрулми тата 5 гектар çинче выльăх кăшманĕ кашни культурине вăтам шутпа гектар пуçне 160-шар центнер туса илме обязательство йышăннă. Силос культурисем, пĕр çул тата нумай çул ÿсекен курăксем мĕнле пуласси Иванов юлташ шучĕпе пĕтĕмпех çанталăкран килет иккен.

«Красный Октябрь» колхозра сĕтеклĕ апатсем çитмен пирки кăçал çуркунне выльăхсем чылай вилнĕ. Анчах ку вăл Иванов юлташа питех пăшăрхантармасть, вăл кăçал та пысăк тухăçлă сĕтеклĕ апатсем туса илессишĕн тăрăшмасть.

Выльăх апачĕ акса тăвасси çине çиелтен пăхакансем ытти колхозсенче те пур.

Ялсенчи культурăпа çутĕç учрежденийĕсем ялхуçалăхĕнче малта пыраканĕсен опычĕ çинчен пропаганда тăвас ĕçрен пăранса тăраççĕ. «Цивильстрой» колхоз фермисенчи работниксем «Гвардеец» колхоз опытне вĕренме кăтарту панă постановлени çинчен илтнĕ, анчах çав опыт çинчен вĕсене тĕплĕн ăнлантарса паракан пулман. Ял Советĕнчи вулав çурчĕ çав постановление колхозниксем патне çитерес тесе нимĕн те туман.

Вĕрмер ял Советĕнчи вулав çурчĕн заведующийĕ Николаев юлташ Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕ йышăннă постановлени çинчен колхозниксене ăнлантарса парас ĕçе организацилеме вăхăт тупайман.

Выльăх апачĕлĕх культурăсем акас ĕçе хăвăртлатмасан, Çĕрпÿ районĕнчи колхозсем каллех иртнĕ çулти пек йывăрлăха кĕрсе ÿкме пултараççĕ. Çавăнпа та КПСС райкомĕпе райсовет исполкомĕн çак ĕçре татăклă улшăну тума çирĕпрех мерăсем йышăнмалла, колхоз правленийĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсенчен ытларах ыйтмалла.

«Коммунизм ялавĕ» хаçат бригади:
М. ОСИПОВ, С. ШАДИН, Н. ВОЛКОВ.

Совет альпинизмĕ

Пирĕн çĕршывра альпинизм анлăн сарăлнă. Çак спорт çынсене хăюллă, чăтăмлă пулма вĕрентет Кашни çул пиншер рабочисем, служащисем, студентсем отпуск е каникул вăхăтне сăртсем хушшинче ирттереççĕ.

Иртнĕ çул профсоюзсен спорт обществисен альпинистсен лагерĕсем 22 пулнă, Вĕсем Кавказри, Памирти, Тянь-Шаньри илемлĕ вырăнсенче. 1952 çулта альпинистсен лагерĕсенче хăйсен отпускне 7,5 пин физкультурник ытла ирттернĕ. Вĕсенчен 4 пин çын ытла «СССР альпинисчĕ» ятлă значок нормине, 850 çын— спорт разрячĕсен нормине, 28 çын — СССР спорт мастерĕ ятне илмелли нормăна тултарнă.

ВЦСПС секретариачĕ 1953 çулта альпинизм енĕпе туса ирттермелли ĕçсен планне çирĕплетнĕ.

Профсоюзсен аллинче тăракан лагерьсенче кăçал 8.600 физкультурник канмалла.

Кăçал совет альпинизмĕ пуçланнăранпа 30 çул тултарать. Çак куна палăртса профсоюзсен ирĕклĕ спорт обществинче тăракан вăйлă альпинистсем Памир тăвĕ çинчи Корженевски тесе ят панă чи çÿлĕ ту çине хăпараççĕ. Çавăн пекех Алтай тăвĕнчи çÿлĕ вырăнсене те хăпараççĕ. Грузи республикинчи профсоюзсен совечĕ Казбек сăрчĕ, Кабардин АССР-ĕнчи профсоюзсен совечĕ — Эльбрус сăрчĕ çине массăллăн хăпарса курассине организацилеççĕ. (ТАСС).

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

Малта пыракан çамрăксене—комсомол ретне

Комсомол малта пыракан çамрăксене пĕрлештерсе тăрать. Комсомол—совет çамрăкĕсен чи авторитетлă организацийĕ. Вăл—партин шанчăклă помощникĕ, унăн резервĕ.

Коммунистсен партийĕ комсомол организацийĕсене çамрăксемпе таччăн çыхăнса ĕçлеме, комсомол ретне чи лайăх çамрăксен шучĕпе ÿстерсе пыма хушать. Парторганизацисем ертсе пынипе комсомол организацийĕсем çамрăксене политикăлла воспитани парас ĕçе лайăхлатрĕç, çавна май хăшпĕр районсемпе хуласенчи ВЛКСМ организацийĕсем хăйсен речĕсене чылай ÿстерчĕç. Кăçал, сăмахран, ВЛКСМ Шупашкар хула комитечĕ 412 çамрăка, Улатăр хула комитечĕ—408, Çĕмĕрле райкомĕ—305, Красноармейски райкомĕ 258 çамрăка комсомол ретне илнĕ.

Пĕтĕмĕшпе илсен, пирĕн республикăри ВЛКСМ организацийĕ çителĕксĕр ÿссе пырать. Нумай пуçламăш организацисем чылай вăхăт хушши ĕнтĕ пачах ÿсмеççĕ. Сăмахран, март уйăхĕнче республикăри 1.904 пуçламăш организацире, вăл шутра колхозсенчи 652 организацире, пĕр çамрăка та комсомол ретне илмен. Уйрăмах ВЛКСМ Кувакино, Муркаш, Сĕнтĕрвăрри тата Улатăр райкомĕсем начар ĕçлеççĕ.

Çамрăксем хушшинче начар ĕçленĕ пиркиех хăшпĕр организацисем темиçе çул хушши ĕнтĕ пĕр çамрăка та ВЛКСМ ретне илмен. Ишлей районĕнчи «Победа», «Верный путь» колхозсенчи, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Правда», «Сĕнтĕрпуç», Первомайски районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан, «Красная Чувашия», Октябрьски районĕнчи Винокуров ячĕпе тăракан, «Победа», Чурачăк районĕнчи «Слава» колхозсенчи организацисем пĕлтĕр пачах ÿсмен. 60 колхозри организацисем йышĕнчен илсен ытла та пĕчĕк, 74 организацире членсен шучĕ çитет пулин те ВЛКСМ комитечĕсем туман.

Çак фактсем ВЛКСМ обкомĕ тата райкомсем колхозсенчи малта пыракан çамрăксене комсомол ретне илес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлени çинчен калаççĕ. ВЛКСМ комитечĕсен кашни пуçламăш организаци уйăхран уйăха ÿссе пытăр тесе тăрăшмалла. Ĕçре тата вĕренÿре малта пыракан çамрăксем нумай. Вĕсем хушшинче политикăлла воспитани ĕçне лайăхлатмалли кирлĕ.

Промышленноçпа транспорт предприятийĕсенчи комсомол организацийĕсем те çителĕксĕр ÿсеççĕ. Канашри вагонсем юсакан заводра, сăмахран, комсомола кĕме çул çитнĕ çамрăксем 500 çынна яхăн шутланаççĕ. Апла пулин те пĕлтĕр кунта комсомол ретне мĕн пурĕ те 15 çамрăка кăна илнĕ. Куславккари çуртсем тăвакан заводри, Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕн тата Улатăрти пĕрлешÿсем юсакан заводри комсомол организацийĕсем те малта пыракан çамрăксене хăйсен ретне сахал илеççĕ.

Çичĕ çул вĕренмелли тата вăтам шкулсенче вĕренекенсене комсомол ретне илесĕç, пĕтĕмĕшпе илсен, йĕркеллĕ пулса пырать темелле. Çапах та хăшпĕр райкомсем, сăмахран, Первомайски, Сĕнтĕр, Тăвай тата Елчĕк райкомĕсем пионерсене комсомол ретне илесси çине çителĕклĕ çаврăнса пăхмаççĕ.

Комсомол организацийĕсем хĕрачасем хушшинче начар ĕçлеççĕ. Çавăнпа малта пыракан çамрăк колхозницăсене комсомол ретне илес ĕç япăх пырать. Пĕлтĕр Тăвай районĕнче 5, Муркаш районĕнче—9, Кувакино районĕнче 12 çамрăк колхозницăна кăна комсомола илнĕ.

Вырăнти комсомол организацийĕсем нумайăшĕ хăйсен ĕçне Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем хушнă пек çĕнетмен. Чылай предприятисемпе колхозсенчи организацисем çамрăксен социализмла ăмăртăвне организацилес ĕçре пуçарулăх кăтартмаççĕ. Вĕсем ăмăртăва тата производствăри ĕçе организацилессине лайăхлатас ыйтусене парти организацийĕсемпе хуçалăх руководителĕсем умне хăюллăн лартмаççĕ. Çамрăксен культурăпа йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Çамрăксене политикăлла воспитани парас ĕç те кирлĕ пек пулса пымасть.

ВЛКСМ обкомĕн II-мĕш пленумĕ партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе материалĕсене тата И. В. Сталинăн «СССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă гениллĕ произведенине çамрăксем хушшинче пропагандăлас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ. Пленум пулнăранпа вăхăт нумай иртрĕ. Çапах та комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен политикăлла вĕренĕвне лайăхлатас ĕçре татăклă улшăнусем туни курăнмасть.

Кружоксемпе политшкулсен пĕр пайĕ халĕ те партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене вĕренме тытăнман. Нумай районсенче лекцилле пропаганда çителĕксĕр. Ленинла-сталинла комсомолăн историйĕ, наукăпа çутçанталăк çинчен лекцисем питĕ сахал пулаççĕ. Комсомол организацийĕсем çамрăксен пĕтĕмĕшле пĕлĕвне тата культурăлла шайне ÿстерес ыйтусемпе сахал интересленеççĕ.

Сĕнтĕр, Элĕк, Калинино, Çĕрпÿ, Вăрнар районĕсенчи комсомол организацийĕсем клубсен, библиотекăсен, вулав çурчĕсен ĕçне кирлĕ таран хутшăнмаççĕ. Çамрăксене воспитани парас ĕçре кĕнекесемпе сахал усă кураççĕ, çамрăксем мĕн вуланипе интересленмеççĕ. Литература каçĕсем, вулакансен конференцийĕсем сахал ирттереççĕ. Художествăлла пултарулăх коллективĕсем те начар ĕçлеççĕ.

Хăшпĕр районсенче комсомолăн шалти пурнăçне, организацилле ĕçне кирлĕ пек йĕркелемен. Хĕрлĕ Чутай, Етĕрне, Вăрмар, Шупашкар, Шăмăршă районĕсенчи пуçламăш организацисенче комсомол пухăвĕсене вăхăтра ирттермеççĕ. Комсомолецсен усă пухăвĕсем пачах пулмаççĕ темелле. Ку районсенчи чылай пуçламăш организацисенче пухусене тĕплĕн хатĕрленмесĕр ирттереççĕ. Унта критикăпа самокритика вăйсăр. Çамрăк комсомолецсене общественăлла ĕçе хутшăнтарма тăрăшмаççĕ. Çамрăксене политикăлла воспитани парас, вĕсен производствăри активлăхне ÿстерес ыйтусем пухусен кун йĕркисенче сахал пулаççĕ.

Нумай çĕрте ВЛКСМ членĕсен прависемпе обязанноçĕсем çинчен ăнлантарса памаççĕ. Çавна пула хăшпĕр комсомолецсем комсомол пурнăçĕнчен уйрăлса каяççĕ, член укçи тÿлемеççĕ, комсомол пухăвĕсене çÿремеççĕ. Ун пек комсомолецсем уйрăмах Сĕнтĕр, Çĕмĕрле, Кувакино тата Пăрачкав районĕсенче пур.

Çамрăксене комсомола илес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме ВЛКСМ обкомĕн тивĕçлĕ мерăсем йышăнас пулать. Пуринчен малтан пуçламăш организацисене ертсе пырас ĕçе тĕпрен лайăхлатмалла, политикăлла воспитани ĕçне вăйлатмалла. Комсомол ретне колхозсенче, МТС-семпе промышленность предприятийĕсенче малта пыракан çамрăксен шучĕпе ÿстермелле. Комсомолăн политикăлла вĕренĕвĕн çулне вăхăтра тата пысăк пахалăхпа вĕçлемелле. Кружоксемпе политшкулсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăрасси—комсомол организацийĕсен хисеплĕ те ответлă тивĕçĕ.

ВЛКСМ райкомĕсемпе хула комитечĕсен кашни пуçламăш организацин ĕçĕпе куллен интересленмелле, комсомол пухăвĕсене ирттерес ĕçе лайăхлатмалла.

Комсомол вăйĕ—парти ертсе пынинче. Парти организацийĕсем комсомол ĕçĕпе куллен интересленме тивĕçлĕ. Анчах хăшпĕр парторганизацисем комсомол организацийĕсене çителĕклĕ ертсе пымаççĕ. ВЛКСМ речĕсем мĕнле ÿсни çинчен парти райкомĕсемпе хула комитечĕсен бюровĕсенче тата пленумĕсенче сайра хутра кăна сÿтсе яваççĕ. Пĕлтĕр ку ыйтăва КПСС Шăхасан тата Етĕрне райкомĕсем кăна сÿтсе явнă.

Комсомол организацийĕсене ертсе пырас ĕçре парти комитечĕсем кăтартусем пани кăна сахал. Ÿссе пыракан çамрăк ăрăва коммунизмла воспитани парасси—парти организацийĕсен куллен тумалли ĕçĕ.

О. ТАЛЛЯ.

Райком пуçламăш организацисене пулăшмасть

КАЛИНИНО. «Сталинец» колхозри комсомол организаци секретарьне А. Капитонов юлташа ВЛКСМ райкомне васкавлăн чĕннĕ. Паян унăн бюрора организацин ĕçĕсем çинчен отчет туса памалла иккен. Отчетне вăл хатĕрлемен.

Лару пуçланчĕ. Пуçламăш организаци секретарĕн «отчетне» бюро членĕсем ыйтусем парса ответсем илнипе итлеме тытăнчĕç. Кунта ирĕксĕрех çакнашкал ыйту туха тăрать: ВЛКСМ райкомĕн бюровĕ çак кĕске отчета итленипех организацири çитменлĕхсене пĕтерме, ĕçе юсама пулăшу пама епле пултарĕ?

«Сталинец» колхозри комсомол организацийĕн ĕçĕнче çитменлĕхсем чăнах та пур. Пухусене çайра-хутра кăна ирттереççĕ. Отчетпа суйлав хыççăн кунта икĕ пуху çеç пулнă. Йышăннă решенисене пурнăçламаççĕ. Комсомолецсене порученисем парасси йăлана кĕмен. Союзра тăман çамрăксемпе пачах ĕçлемеççĕ. Комсомолец-агитаторсем колхозниксем хушшинче агитацилле-массăлла ĕçе тумаççĕ. Стена хаçачĕпе боевой листоксем кăлармаççĕ.

«Сталинец»—район центрĕнчи колхоз. Çывăх пулин те комсомол райкомĕн работникĕсем ку организацири çитменлĕхсене пĕтерме пулăшу паман.

Чкалов ячĕпе тăракан колхозри комсомол организацийĕ союзра тăман çамрăксем хушшинче ĕçлемест. Çавăнпа иртнĕ 5 уйăх хушшинче пĕр çамрăка та комсомол ретне илмен. Организаци çумĕнчи политшкула союзра тăман пĕр çамрăка та хутшăнтарман. Хăшпĕрисем ВЛКСМ уставне пăсаççĕ. Икĕ комсомолец 5 уйăхшăн, виççĕшĕ 3 уйăхшăн член укçине тÿлемен. И. Семенов член укçи вăхăтра тÿлемест, пухусене те сăлтавсăрах çÿремест, панă порученисене вăхăтра пурнăçламасть. Комсомол организацийĕ (секретарĕ З. Нестеров) дисциплинăна çирĕплетес енĕпе нимĕн те тумасть.

Асăннă çитменлĕхсемпе ВЛКСМ райкомĕ килĕшсе ларать. Райком секретарĕ В. Викторов хăйĕн работникĕсене начар ĕçлекен организацисене ямасть. Вĕсем унта пулсан та организаци секретарĕсене ĕçлеме вĕрентсе хăвармаççĕ.

Н. КУРЦОВ.

Хĕрлĕ Чутай районĕнче ялхуçалăх кадрĕсемпе тĕрĕс мар ĕçлеççĕ

Ленин ячĕпе тăракан колхозра Анна Семеновна Тихонова виçĕ çул доярка пулса ĕçленĕ. 1951 çулта вăл хăйне çирĕплетсе панă кашни ĕнерен 1.144 литр сĕт суса илнĕ, районти ялхуçалăх выставкине тăма тивĕçлĕ пулнă. 1952 çулта вара вăл кашни ĕнерен 1.207-шер литр сĕт суса илет. Анчах, ферма заведующийĕ Ф. Савельевпа иккĕшĕн хушшинчи пĕчĕк хирĕçÿсене пула, Тихонова, малтан выставкăна тăратма палăртнăскер, выставкăра пулаймасть. Юлашкинчен, правленин 1952 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнче пулса иртнĕ ларăвĕнче, ферма заведующийĕ Ф. Савельев «е мана, е ăна ĕçрен кăларăр» тесе татăклă ыйту лартать. Правлени, паллах, пысăк та ответлă участока ертсе пыракан çынна вырăнтах хăварать. Çапла А. Тихонова доярка ĕçрен тухса ÿкет.

Çакăн çинчен ялхуçалăх пайĕн старши зоотехникĕ пулса ĕçленĕ М. Макашкина КПСС райкомĕн пĕррремĕш секретарьне А. Филиппов юлташа çырса пĕлтерет.

Ыттисемшĕн те урок пултăр, пурне те пĕлмелле тăвас тесе, А. Филиппов юлташ районти хаçат редакторĕ патне çапла çырса ярать:

«Тĕрĕслес те, тĕрĕс пулсан, фельетон çырса пичетлес. Маленков ячĕпе тăракан колхозра та Москалева дояркăпа çавăн пек пулнă. А. Филиппов».

Редакцинчи юлташсем те ку ĕçе çийĕнчех çитсе тĕрĕслеймеççĕ. Вара редактор М. Назаров юлташ Ленин ячĕпе тăракан колхоза отчетпа суйлав пухăвĕ ирттерме каякана—парти райкомĕн виççĕмĕш секретарьне Ермолаев юлташа çул май çак ĕçе тĕрĕслесе килме ыйтать. Ермолаев юлташ тĕрĕслесе чăрманас темен. Тавранса́н, «нимĕн те ăнланаймарăм» тесе, Макашкина çырăвне вăл редакцие каялла тавăрса парать.

Çапла вара КПСС райкомĕн икĕ секретарĕ те малта пыракан дояркăна ĕçрен кăларнă факта тивĕçлĕ вырăна хурса хакламан. А. Филиппов юлташ та хут çине алă пусса редакцине панă та, хăй хушнине мĕнле пурнăçланине тĕрĕслемен. Ермолаев юлташ вара ку ĕç çине çаврăнса та пăхман.

Елена Федоровна Москалева Маленков ячĕпе тăракан колхозра 6 çул доярка пулса ĕçленĕ. Лайăх ĕçшĕн вăл «Ĕçри хастарлăхшăн» медаль илме тивĕçлĕ пулнă. 1952 çулта Москалева юлташ хăй пăхнă кашни ĕнерен пин литра яхăн сĕт суса илнĕ, 10 ĕнерен 12 пăру илсе ÿстернĕ. Фермăна ĕçламе кĕнĕ çĕнĕ заведующин арăмĕ фермăна пырса хирĕçнĕшĕн, «фермăра хирĕçÿ тухса каять» тесе, правлени лайăх ĕçлекен дояркăна ĕçрен кăларать.

Ку колхозри Ольга Павловна Андрианова дояркăна та çав шăпах пырса тивет. Вăл та правительство «Ĕçри хастарлăхшăн» медальпе наградăланă çын.

Çак тĕслĕхсем КПСС райкомĕпе райсовет исполкомĕн ялхуçалăх пайĕ ялхуçалăхĕнчи работниксемпе пачах тĕрĕс мар ĕçлени çинчен каласа параççĕ.

Ферма заведующийĕсем райком номенклатурине кĕреççĕ. Анчах КПСС райкомĕ вĕсене чĕнсе илсе бюрора çирĕплетет те, урăх аса та илмест. Вĕсене пулăшас, вĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтерес, пĕлĕвне тата ĕçри ответлăхне ÿстерессi, политикăлла воспитани парасси çинчен вара сăмах та çук. КПСС райкомĕ пĕр уйрăмлăха асра тытмасть: колхозсем пĕрлешсе пысăкланнă май выльăх-чĕрлĕх фермисен колхоз центрĕнчен аякра вырнаçасса [illegible] пулчĕ. Çавăнпа [illegible] контрольсĕр [illegible] мар, ÿсĕ [illegible]. Унсăр ферма заведующийĕсем хăйсен ĕçĕнчи [illegible] пăрахаççĕ, [illegible], хăйсен кус умĕнчи улшăнусене урăхла ăнланма тытăнаççĕ.

Шăп та шай çакăн пек пулса тухнă та ĕнтĕ Ленин ячĕпе тăракан колхозра. А. Тихонова ĕçлекен ĕне фермин колхоз центрĕнчен 5 километрта. Опытлă дояркăпа малтанхи пекех тăрăшса ĕçленĕ, фермă заведующийĕ [illegible] пекех требованисем лартнă. Анчах тин кăна ĕçлеме тытăннă заведующи Ф. Савельев ăна урăхла ăнланнă. «Сана нумай ыйтрăм» «Эс çĕкленсен, хисепĕ сана кăна пулать» текен кĕвĕçÿ туйăмĕ ăна малтан чăрмав çулĕ çине тăратать, унтан дояркăна ĕçрен кăларасси патне илсе пырать.

КПСС райкомĕпе райсовет исполкомĕ çакăн пек «пĕчĕк» факта тивĕçлĕ вырăна хурса хакламанни, унтан тивĕçлĕ вывод туманни вĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх пулса тăрать.

Ферма заведующийĕсем, вĕсен ĕçне контролламен тата ертсе пыман пирки, час-часах йăнăш çул çине кĕрсе каяççĕ. Вара вĕсене ирĕксĕрех ĕçрен кăлармалла пулать. Çапла, сăмахран, 1953 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕх фермисене 115 çын ертсе пынă. Вĕсенчен çурри ытла (65 çын) хăйсене лартнă вырăнта çулталăк ĕçлемен, 13 çын кăна виçĕ çултан ытларах ĕçлет. 1952 çул хушшинче кăна ферма заведующийĕ пулса ĕçлекен 59 çынна ĕçрен кăларса çĕнĕрен лартнă. Дояркăсенчен 50 процентĕ яхăн çĕнĕрен лартнă çынсем шутланаççĕ. Çавăн пекех ытти выльăх-чĕрлĕх пăхакансене те кунта çине-çине улăштараççĕ. Берия ячĕпе тăракан, «День урожая» колхозсенче 1953 çулта кăна ферма заведующийĕсене икшер хут улăштарма ĕлкĕрнĕ.

Районти колхозсем хăйсен кассинчен укçа тÿлесе, ялхуçалăх валли кадрсем хатĕрлесе, анчах вĕсемпе тĕрĕс усă курассишĕн тăрăшмаççĕ. «День урожая» колхозра, сăмахран, фермăна ертсе пыма Вăрнарти ялхуçалăх шкулĕнчен вĕренсе тухнă Елена Трофимова комсомолкăна лартнă пулнă. Анчах çамрăка ĕçре пулăшас вырăнне, ăна колхозра тÿсмелле мар условисем лартаççĕ. Е. Трофимова ирĕксĕрех ĕçрен тухать. Çавăн пекех Етĕрнери ялхуçалăх шкулĕнчен вĕренсе тухнă Альгешкинăна та çул шамаççĕ. Халĕ вĕсем иккĕшĕ те ялюра ĕçлеççĕ.

Колхозри ялхуçалăх специалисчĕсем хăйсен енĕпе ĕçлемен тĕслĕхсем районта сахал мар.

Районта колхоз кадрĕсене кăна мар, ялхуçалăх специалисчĕсене те çавăн пекех хаклаймаççĕ. Унтан та ытларах. Опытлă специалистсене ĕçрен пăрни те кунта йĕркеллĕ япала шутланать. Федор Тихонович Кудряшов иртнĕ çулсенче кок-сагыз ĕрчетес тĕлĕшпе старши агроном пулса ĕçленĕ. Ĕçре тĕрĕслĕхе юратаканскер, вăл пухусенче тата тĕрлĕ канашлусенче час-часах аслăраххисене те критиклесе илнĕ. Кок-сагыз ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен агрономсен штатран тухса ÿксен, штат чармалли пĕрремĕш кандидат Кудряшов пулса тăрать.

Пĕррехинче, ĕçсĕр пурăннă вăхăтра, КПСС райкомĕн секретарĕ А. Филиппов юлташ ăна тĕл пулать те ыйтать:

— Эсĕ халĕ те ĕçсĕрех-и? Эпир МТС директорне сана ĕçе илме хушнăччĕ-çке...

Çак калаçу хыççăн Ф. Кудряшов юлташ вăл шăнтри МТС директорĕ [illegible] патне пырать.

— Манăн пушă вырăн çук,—[illegible] калать Волков юлташ Ф. Кудряшова.

Кунта чăннипех те пушă вырăн пулман иккен. МТС руководителĕсем ĕçĕпе ятне янă Перепелкин агронома ĕçрен кăларма палăртнă пулнă. Анчах Перепелкина ĕçрен кăларма мар, МТС-ра главнăй агроном вырăнĕнче ĕçлеме хушаççĕ.

Çапла 13 çул хушши ĕçленĕ агронома ĕçсĕр тăрса хăвараççĕ. 1952 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа кăçалхи апрель уйăхĕччен ĕçсĕр пурăннă хыççăн, агроном Ф. Кудряшов Çĕмĕрлери «Союзтабак» кантурĕн участокри приемщикĕ пулса ĕçлеме тытăнать.

Пултаруллă зоотехник М. Ярилина Улатăр районне ĕçлеме тухса каять. Хĕрлĕ Чутай районĕнче ăна хисепе хуман, çул паман, Улатăр районĕнче вăл хăйне лайăх енчен кăтартма пултарнă.

Паянхи куна О. Ядуванкина зоотехник, КПСС райкомĕн секретарĕ патне Тихонова доярка çинчен çырса пĕлтернĕ М. Макашкина хăй те ĕçлемеççĕ.

— Кăштах «крутăрах» пулчĕ пулмалла,—тет ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ В. Моложин юлташ,—Макашкина пирки калаçу хускансан.

Ĕç акă мĕнле пулса иртнĕ. М. Макашкина зоотехника участокра яма палăртнă пулнă. Приказне çапла çырас вырăнне, тăрăхнă самант тĕлне лекнĕ заведующи «эп хушнине итлеменшĕн, ĕçе пултарайманшăн ĕçрен хăтарас» тесе приказ çырать. Çав хушăрах приказĕнче вăл ĕçе пултарайманнине кăтартакан пĕр факт та илсе кăтартмасть. «Ĕçрен хăтарнă» зоотехник вара участока та каймасть.

Пур ĕçе те кадрсем татса параççĕ, тесе вĕрентнĕ пире аслă çулпуçăмăр Сталин юлташ. Районти ялхуçалăхĕ юлса пыни пĕтĕмпех кадрсемпе тĕрĕс мар ĕçленинчен килет. Вĕсене шута хуманни района питĕ хакла ларать: район тырпул туса илес тĕлĕшпе те, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те татăклă улшăну тăваймасть. Уйрăмах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе район çав тери юлса пырать. 36 колхозран 5 колхоз кăна плана пур выльăх енĕпе те тултарнă, вăл шутран иккĕшĕ кăна выльăх-чĕрлĕх усрамалли минимума тултарса льгота илме тивĕçлĕ пулнă.

Выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăш унтан та сахалтарах. Сĕт суса илес тĕлĕшпе, сăмахран, район виççĕмĕш çул тăтăш каялла чакса пырать. 1950 çулта кашни ĕнерен 723 литр сĕт суса илнĕ пулсан, 1952 çулта вара 589 литр кăна суса илнĕ. Районта кашни ĕнерен çулталăкне 247—267-шер литр сĕт суса илекен колхозсем те пур. Ытти выльăхсенчен илекен тупăш та çавăн пекех пĕчĕккĕ.

Районти колхозсем умĕнче 1953 çулта пысăк задачăсем тăраççĕ. Çĕмĕрле районĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсемпе тунă социализмла ăмăрту договорĕ тăрăх, кашни гектартан илекен тырпул тухăçлăхне 90 пăта çитермелле, вăл шутран ыраш—100 пăт, сурхи тулă—90 пăт. Выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăша та чылаях ÿстерме палăртнă. Кашни ĕнерен, сăмахран, 1.200 литр сĕт, кашни сурăхран 2,5 килограмм çăм, кашни чăхран 70 çăмарта илмелле.

Çак хисеплĕ задачăсене пурнăçлас пулсан, Хĕрлĕ Чутай райкомĕпе райсовет исполкомĕн кадрсемпе ĕçлессине тĕпренех лайăхлатмалла.

Е. АФАНАСЬЕВ.
(«Коммунизм ялавĕ» корр.).

Малта пыракан совет науки

И. В. Сталин аслă шкул работникĕсене 1938 çулхи майăн 17-мĕшĕнче Кремльте йышăннă чухне туса каланăранпа 15 çул çитнĕ тĕле

Вунпилĕк çул каялла И. В. Сталин аслă шкул работникĕсене йышăннă чухне туса каланă сăмахра малта пыракан, халăх интересĕсемшĕн ĕçлекен совет науки малалла аталанса пымалли çула палăртса хучĕ, ученăйсене халăх ырлăхĕшĕн, социализмла тăван çĕршыва малалла чечеклентерессишĕн вĕсем творчествăлла ĕçсем туса пымалли программăна кăтартса пачĕ. И. В. Сталин хăйĕн сăмахĕнче малта пыракан наукăн тĕп паллисене кăтартса пачĕ: вăл халăхран уйрăлса тăмалла мар, халăхшăн хăйĕн ирĕкĕпе, кăмăлтан ĕçлемелле; вăл малалла кайма чăрмантарса тăракан кивĕ йăласемпе хăнăхусене хăюллăн çĕмĕрмелле тата çĕнĕ, прогрессивлă йăласемпе нормăсем туса хумалла; хăйĕн кивĕ руководителĕсене наука монополисчĕсен хупăх ăшĕнче питĕрĕнсе ларма памалла мар, ĕçе çамрăк вăйсене анлăн хутшăнтармалла, наукăри кивĕ кадрсене çĕннисемпе пĕрлештермелле.

Сталин юлташ çапла кăтартса панă: В. И. Ленин наукăри мĕнпур кивелнĕ тата консервативлă йăласене хирĕç хăюллăн кĕрешнĕ, наукăн çĕнĕ çулĕсене паттăррăн хывса панă çыннăн тĕслĕхĕ пулса тăрать. В. И. Ленин—наукăн аслă корифейĕ, вăл ăна малалла илсе пынă, ăна çĕнĕ, гениллĕ выводсемпе тата положенисемпе пуянлатнă.

И. В. Сталин та наукăн аслă корифейĕ пулса тăрать, вăл марксистла-ленинла теорие питех те паха теориллĕ открытисемпе пуянлатрĕ, çав открытисем мĕнпур халăхсене общéствăна революцилле майпа урăхлатса çĕнетмелли çулсене кăтартса параççĕ тата пирĕн партин коммунизмшăн кĕрешĕвĕ питех те пуян опычĕпе хĕçпăшалланатараççĕ.

* * *

Социализмла строй СССР Союзĕнче наукăна малалла аталантарма пысăк майсем усса панă. Вăтăр пилĕк çул каялла, Октябрьти революци çĕнтерни хыççăн икĕ çул хушшинче сурă иртсен, В. И. Ленин çапла çырнă: «Ĕлĕк этемĕн пĕтĕм ăсĕ, унăн пĕтĕм генийĕ пĕрисене техникăпа культурăн мĕнпур ырлăхĕсене парассишĕн, теприсене вара чи кирлисĕр — вĕренÿлĕхсĕр тата аталанусăр тăратса хăварассишĕн çеç ĕçленĕ. Халĕ ĕнтĕ техникăн мĕнпур тĕлĕнмелле ĕçĕсем, культурăн мĕнпур çитĕнĕвĕсем пĕтĕм халăх пуянлăхĕ пулса тăрĕç...» (Соч., 26 том, 436 стр.). Сталин юлташ пирĕн çĕршывăн наукăна хÿтĕлекен тата саракан çĕршыв пулса тăрас аслă малашлăхĕ пуррине кăтартса пачĕ. Ленинпа Сталин малтанах пĕлсе тăнисем пурнăçа кĕчĕç. Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе Совет Союзĕ малта пыракан наукăпа культура çĕршывĕ пулса тăчĕ. Çакна, пуринчен малтан, аслă вĕренÿ ĕçĕ калама çук хăвăрт ÿсни кăтартса парать. Совет влаçĕ пуличчен пирĕн çĕршывра 91 аслă шкул пулнă, вĕсенче 100 пин ытларах студент вĕреннĕ пулсан, хальхи вăхăтра СССР Союзĕнче аслă шкулсем 900 яхăн, вĕсенче вĕренекен студентсен хисепĕ 1.440 пинрен те иртнĕ, 1952 çул пуçламăшĕ тĕлне пирĕн çĕршывра институтсем, лабораторисем тата ытти наукăлла учрежденисем 2.900 пулнă. СССР Наукăсен академийĕ наукăлла ĕçсен чăн-чăн центрĕ пулса тăчĕ, вăл союзлă республикăсенчи 12 академин тата хăйĕн 15 филиалĕн творчествăлла ĕçĕсене ертсе пырать.

Пирĕн государство наукăна аталантарма питех те нумай укçа-тенкĕ расходланă. 1946—1951 çулсенче кăна çакăн валли 47,2 миллиард тенкĕ расходланă.

Коммунистсен партийĕ çывăх вăхăтрах çĕршывсенчи наука çитĕнĕвĕсене хăваласа çитме кăна мар, унтан иртсе кайма кирли çинчен кăтартса панине асра тытса, совет ученăйĕсем пĕлÿсен пур облаçĕсенче те пысăк çитĕнÿсем турĕç. Çакă вăл наукăлла чаплă ĕçсемшĕн, изобретенисемшĕн тата производствăлла ĕçсен меслетне тĕпренех лайăхлатнăшăн наука, промышленность, транспорт тата ялхуçалăх работникĕсене 8.470 çынна Сталинла премин лауреачĕн хисеплĕ ятне панинчех лайăх курăнать.

Совет наукин питĕ пысăк уйрăмлăхĕсенчен пĕри вăл практикăпа, производствăпа тачă çыхăну тытни пулать. Пирĕн çĕршывра наукăпа производство работникĕсем творчествăлла çыхăнса ĕçлесси анлăн саралнă.

Сăмахран, Ленинградри М. И. Калинин ячĕпе тăракан политехника институчĕн наукăлла работникĕсем çĕршыври 94 предприятипе тата учрежденипе творчествăлла çыхăну тытса ĕçлеме договор тунă. Вăл питĕ кирлĕ 142 ыйту тăрăх наукăпа тĕпчев ĕçĕсем туса пырать. Çак ответлă ĕçе наука сотрудникĕсем 540 çын хутшăннă. Ленинградри В. И. Ульянов-Ленин ячĕпе тăракан электротехника институчĕ 39 завода пулăшса пырать. Мускаври наукăпа тĕпчев институчĕсен тата аслă шкулсен коллективĕсем 500 ытла предприятие практикăлла пулăшу параççĕ.

Кун пек тĕслĕхсем нумай. Вĕсем ученăйсемпе производственниксем пĕр-пĕринпе çыхăну тытасси ÿссе тата çирĕпленсе пынине кăтартса параççĕ, çакă вара экономикăн пур отраслĕсенче те пĕрмаях техникăлла прогресс туса пымалли питĕ паха условисенчен пĕри пулать.

Совет Союзĕнче наукăпа техника аталанăвĕ çулĕ шая çитни халăх хуçалăхĕн питех те пысăк задачăсене татса пама—питĕ пысăк гидроэлектростанцисемпе каналсем тума тата çутçанталăка улăштарса çĕнетмелли чаплă плана пурнăçа кĕртме май парать.

Совет наукин вăйĕ унăн аталану çулне марксистла-ленинла теори çутатса тăнинче пулать. Совет ученăйĕ вăл—халăхран, практикăлла пурнăçран уйрăлса кайнă çын мар, «таса» наука пĕлĕчĕсем çинче шухăшпа вĕçсе çÿрекен çын мар, хăйĕн пĕтĕм пĕлĕвĕсене коммунизм строительствин аслă ĕçне паракан активлă общественăлла деятель.

Совет наукин вăйĕ ăна наука работникĕсемпе пĕрле хуларипе ялти ĕçченсем, производство новаторĕсем аталантарса, пуянлатса, малалла илсе пынинче пулать. «Тата çапла та пулать,—тенĕ И. В. Сталин аслă шкул работникĕсене йышăннă чухне каланă сăмахра,—наукăпа техникăн çĕнĕ çулĕсене хăшпĕр чухне наукăри пуриншĕн та паллă çынсем мар, наука тĕнчинче пачах та паллă пулман çынсем, ахаль çынсем, практиксем, ĕç новаторĕсем хываççĕ».

Пирĕн пурнăçра рядовой рабочисемпе колхозниксем, производствăра малта пыракансем хăйсен практикăлла пысăк опытне пĕтĕçтерсе вĕсемпе наукăна пуянлатнине кăтартса паракан тĕслĕхсем нумай. Производствăри нумай новаторсене паллă ученăйсемпе пĕртанах Сталинла премин лауреачĕн ятне панă.

Наукăна техника новаторĕсем пулса тăнă çак рабочисен ятне — «Красный выборжец» заводри плавильщик Подмостков юлташăн, И. В. Сталин ячĕпе тăракан металл заводĕнчи разметчик Дмитриев юлташăн, пысăк хăвăртлăхпа ĕçлекен токарьсен Борткевич, Быков, Диков юлташсен, атă-пушмак фабрикинчи Лидия Корабельникова работницăн, Василий Колесов токарĕн тата ытти малта пыракан, пысăк тухăçлăхпа ĕçлекен пиншер çынсен ячĕсене пĕтĕм çĕршыв пĕлет. Вĕсем, наука работникĕсемпе, инженерсемпе, техниксемпе творчествăлла çыхăну тытса, техникăлла кăткăс задачăсене татса параççĕ, хăйсен пуçарулăхĕпе социализмла производствăна çĕнĕ, тата çÿлĕрех пусăма çĕклеме пулăшаççĕ.

Ĕçсыннисен творчествăлла пуçарулăхĕ анлăн сарални, вĕсен культурăлла-техникăлла шайĕ ÿсни 1952 çулта кăна промышленноçра, строительствăра тата транспортра 800 пине яхăн изобретение, техникăлла çĕнетÿве тата рационализацилле сĕнĕве ĕçе кĕртнинчен уççăн курăнать.

Капитализмла çĕршывсенче наукăн условийĕсем пачах урăхла. Унта вăл монополистсен чури пулса, тÿрременех вĕсене пăхăнса тăрать. Капиталистсем наукăна аталантарма, техникăна малалла яма чарса тăраççĕ. Империалистсем наукăна хăйсен çынна курайман планĕсене пурнăçлассишĕн кĕрешмелли, çынсене массăллăн вĕлерсе пĕтермелли хĕçпăшал туса хураççĕ.

Англири паллă ученăй Джон Бернал çапла çырать: «Капитализм вăхăтĕнче наука телей мар, инкек пулса тăвать. Ученăй хăйĕн ирĕклĕхне çухатнă, вăл хăйĕн ăсран тухнă хуçисен чури пулса тăрать».

Ученăйсен открытийĕсемпе изобретенийĕсене вĕсем капиталистсемшĕн усăллă пулсан, вĕсем эксплуатацие вăйлатма, капиталистла чи пысăк услам илме пулăшсан çеç пурнăçа кĕртеççĕ.

Çапла, сăмахран, Америкăра автомобильсем тăвакан «Дженерал Моторс» трест хăйĕн аллинчи патентсен пĕр процентне кăна усă курнă; патентсен 99 проценчĕ трест руководителĕсем, ытти предприятисене вĕсемпе усă курма парас мар тесе, пытарса хунă.

Капитализм çĕршывĕсенчи наука положенийĕ Ленинăн çак сăмахĕсем тĕрĕс пулнине уççăнах çирĕплетсе кăтартать: «социализм кăна наукăна унăн буржуалла тăллисенчен, ăна капитал пусмăрĕнчен, вăл капиталистла вараланчăк хапсăнăвĕн чури пулса тăнинчен ирĕке кăларĕ» (В. И. Ленин. Соч., 27 том, 375 стр.).

* * *

Партин XIX-мĕш съезчĕ пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче çĕршыв экономикипе культурине çĕнĕрен хăватлăн ÿстерме палăртнă. Çав ÿсĕме тăвас ĕçре наука пысăк вырăн йышăнма тивĕçлĕ. Г. М. Маленков юлташ съездра тунă докладра «тĕнчери наукăра пĕрремĕш вырăн йышăнас задача лартса, малта пыракан совет наукине малалла аталантармалла», терĕ.

Партин XIX-мĕш съезчĕ пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче аслă шкулсенчи аспирантурăра тата наука учрежденийĕсенче наука тата наукăпа педагогика кадрĕсем хатĕрлессине, кун умĕнхи пилĕкçуллăхрипе танлаштарсан, икĕ хут ÿстерме палăртнă.

Съезд решенийĕсенче наукăпа тĕпчев институчĕсен ĕçне тата аслă шкулсенчи наукăлла ĕçе лайăхлатма, халăх хуçалăхне аталантарас ĕçĕн чи кирлĕ ыйтăвĕсене татса парас, малта пыракан опыта пĕтĕçтерес ĕçре наука вăйĕсемпе туллинрех усă курма, наука открытийĕсемпе практикăра анлăн усă курма кирлине кăтартса панă. Съезд пĕлÿсен пур облаçĕсенче теориллĕ проблемăсене татса парас ĕçре ученăйсене пур майсемпе те пулăшма тата наука производствăпа çыхăну тытассине çирĕплетме хушрĕ. Çавăнпа пĕрлех съезд решенийĕсем инженерсемпе техниксем, рабочисем тата колхозниксем хушшинче производствăна техника тĕлĕшпе малалла лайăхлатассишĕн тата сарассишĕн, пур ĕçе те механизацилессишĕн, ĕç условийĕсене çăмăллатассишĕн тата малалла лайăхлатассишĕн тăрăшакан изобретательсемпе рационализаторсен массăлла юхăмне сарса яма хушаççĕ.

Çĕнĕ пилĕкçуллăхра специалистсем вĕрентсе кăларасси чылай ÿсет. 1952 çулта пирĕн çĕршывра аслă тата вăтам пĕлÿ илнĕ 5,5 миллион специалист ĕçленĕ. Пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхра аслă шкулсемпе вăтам шкулсенче мĕнпур тĕрлĕ специалистсем вĕрентсе кăларасси 30—35 процента яхăн ÿсмелле.

Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе коммунизм тăвакан халăхăн творчествăлла ĕçĕнче наукăпа техника çыннисем хисеплĕ те ответлă вырăн йышăнса тăраççĕ, мĕншĕн тесен коммунизма чи çÿлĕ техника никĕсĕ çинче, наукăпа техникăн нихçан пулман пек чечеклентерсе янă никĕс çинче тăваççĕ.

Халăхпа тачă çыхăннă, Ленин—Сталин идейисене чĕререн парăннă совет ученăйĕсем хăйсен мĕнпур пĕлĕвĕсемпе вăйĕсене коммунизм строительствин аслă ĕçне параççĕ.

Н. ВЛАДИМИРОВ.

Потребительсен кооперацийӗн ӗҫне ӑйлатассишӗн

Чӑвашпотребсоюз Совечӗн VII-мӗш пухӑвӗнчен

Чӑвашпотребсоюз Совечӗн VII-мӗш пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пуху Чӑвашпотребсоюз правленийӗн тата ревизи комиссийӗн отчечӗсене, потребительсен кооперацийӗн пурлӑхне упрасси ҫинчен тата ытти ыйтусене те сӳтсе явса решенисем йышӑнчӗ.

Докладчиксем Шишкин, Балашов, Осанов юлташсем тата прение тухса калаҫакансем пирӗн республикӑра, пӗтӗм ҫӗршыври пекех, тавар ҫаврӑнӑшӗ ҫултан-ҫул ӳссе пынине палӑртрӗҫ. Совет ҫыннисен пурнӑҫне пӗрмаях лайӑхлатса пыма тӑрӑшасси Коммунистсен партийӗпе Совет правительствишӗн чи пысӑк закон пулса тӑрать. И. В. Сталин юлташ ҫапла вӗрентет: социализмла производство меслечӗн тӗллевӗ услам мар, ҫынна мӗн кирлине, унӑн материальнӑй тата культурӑлла ыйтӑвӗсене тивӗҫтересси пулса тӑрать. Пиллӗкмӗш пилӗкҫуллӑхра государствӑпа кооперации суту-илӗвӗн ваккӑн сутакан тавар ҫаврӑнӑшне 70 процента яхӑн ӳстерме палӑртнӑ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче промышленность таварӗсемпе апат-ҫимӗҫ продукчӗсен хакӗсене ултӑ хут йӳнетнӗ. Пиллӗкмӗш пилӗкҫуллӑхра таварсен ваккӑн сутмалли хакӗсене малалла йӳнетсе пыма палӑртнӑ.

1952 ҫулта Чӑвашпотребсоюз, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 5,2 миллион тенкӗлӗх тавар нумайтарах сутнӑ. Кӑҫал тавар ҫаврӑнӑшӗ уйӑхран уйӑха ӳссе пырать. Таварсен хакӗсене ҫӗнӗрен йӳнетнӗ хыҫҫӑн ӗҫсыннисем хаклӑ йышши япаласем, уйрӑмах культура таварӗсем ытларах туянма пуҫланӑ. Юлашки вӑхӑтра ҫӗнӗ магазинсем, ларексем, столовӑйсем, пекарньӑсем чылай уҫнӑ. Халӗ республикӑри потребительсен кооперацийӗн грузсем турттармалли автомашинӑсем 152. Суту-илӳ работникӗсем, пӗтӗм совет халӑхӗпе пӗрле, пиллӗкмӗш пилӗк ҫуллӑх плана срокчен тата иртерсе тултарассишӗн вӑя шеллемесӗр кӗрешеҫҫӗ.

Анчах Чӑвашпотребсоюз правленийӗ ҫав паха условисемпе кирлӗ пек усӑ курмасть. 1952 ҫулта тата кӑҫалхи тӑватӑ уйӑх хушшинче потребительсен кооперацийӗ ӗҫсыннисене тавар планпа палӑртнинчен 27 миллион тенкӗлӗх сахалтарах сутнӑ. 1952 ҫулхи плана Елчӗкри райпотребсоюзпа Шӑмӑршӑри райпо ҫеҫ тултарнӑ. Кӑҫалхи пӗрремӗш кварталта тавар ҫаврӑнӑш планне тултарнӑ райпотребсоюзсен хисепӗ вунвиҫҫе ҫитнӗ. Ҫапах та Чӑвашпотребсоюз ҫителӗксӗр ӗҫленӗ. Уйрӑмах Ҫӗмӗрлери, Красноармейскинчи, Улатӑрти райпотребсоюзсем, Тӑвайри райпо юлса пынине палӑртас пулать. Хӗрлӗ Чутай, Чурачӑк, Красноармейски тата ытти хӑшпӗр районсенчи магазинсемпе ларексенче час-часах ӗҫсыннисене куллен кирлӗ таварсем — тӑвар, шӑрпӑк, краҫҫын, супӑнь пулмаҫҫӗ. Ҫак таварсем базӑсемпе складсенче кирек хӑҫан та ҫителӗклӗ. Чылай магазинсемпе ларексене вӑхӑтра уҫмаҫҫӗ, теприсем — эрни-эрнипе хупӑ тӑраҫҫӗ. Суту-илӳ йӗркине пӑснӑ тӗслӗхсем те сахал мар.

1953 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне базӑсемпе складсенче нормӑран ытлашши 73 миллион тенкӗлӗх тавар пулнӑ. Кашни уйӑхра ҫӗнӗрен таварсем нумай кӳрсе килеҫҫӗ. Урӑхла каласан, тавар ҫаврӑнӑш планне тӑтӑшах тултарса пыма ҫеҫ мар, иртерсе тултарма та условисем пур. Чӑвашпотребсоюз правленийӗ тата базӑсен руководителӗсем кӳрсе килнӗ таварсене районсем тӑрӑх тӗрӗс мар валеҫсе параҫҫӗ. Пӗр йышши таварсемех хӑшпӗр районсенче ытлашши нумай, теприсенче — ҫителӗксӗр. Райпотребсоюзсемпе ялпосем ӗҫсыннисене тата колхозсемпе организацисене хӑш вӑхӑтра мӗнле таварсем кирлине тата колхозниксемпе служащисен ыйтӑвӗсем ӳссе пынине шута илмеҫҫӗ. Райпотребсоюз председателӗсем базӑсенче сахал пулаҫҫӗ, таварсем суйласа илес ӗҫе пӗтӗмпех товароведсене шанса параҫҫӗ. Магазина ҫӗнӗ таварсем кӳрсе килни ҫинчен ӗҫсыннисене сийӗнчех пӗлтермеҫҫӗ, таварсен витринисене йӗркелемеҫҫӗ.

Суту-илӳ организацийӗсен ӗҫӗнчи тепӗр пысӑк ҫитменлӗх — вырӑнти промышленноҫпа промысла кооперацийӗн предприятийӗсемпе тачӑ ҫыхӑну тытманни, вӗсене халӑха куллен кирлӗ таварсем ытларах туса кӑларма заказсем паманни. Хӑшпӗр райпотребсоюзсен председателӗсем вырӑнта туса кӑларакан япаласем туянса сутассине хакламаҫҫӗ. Йӗпреҫри, Улатӑрти тата Етӗрнери райпотребсоюзсем 1952 ҫулта колхозсене урапа кустӑрми тата ҫуна пачах сутман.

Колхозниксене, колхозсене, учреждениссемпе организацисене кирпӗч, черепица, известь, пурӑ, кӗленче, пӑта, хӑма тата ытти строительство материалӗсем нумай кирлӗ. Халлӗхе ҫак материалсене чылай ҫӗрте тупма хӗн.

Нумай районсенче кӗнеке сутас ӗҫе йӗркелемен. Магазинсемпе ларексенче кӗнекесене хисеплӗ, курӑнакан вырӑна вырнаҫтармаҫҫӗ, витринӑсем тумаҫҫӗ. Продавецсем нумайӑшӗ кӗнеке содержанине пӗлмеҫҫӗ, ӗҫсыннисене ҫӗнӗ кӗнеке килни ҫинчен пӗлтермеҫҫӗ.

Швейсбыт, Главхимсбыт, Текстильсбыт, Главобувьсбыт, Рыбсбыт базисем час-часах оперативлӑ ӗҫлемеҫҫӗ, хӑшпӗр йышши таварсене вӑхӑтра тата ҫителӗклӗ кӳрсе килмеҫҫӗ.

Столовӑйсемпе чайнӑйсем тавар ҫаврӑнӑш планне ӑнӑҫлӑ тултарса пыраҫҫӗ. Анчах вӗсен ӗҫӗнче те ҫитменлӗхсем нумай. Чылай столовӑйсемпе чайнӑйсенче таса мар, апат пахалӑхӗ ҫителӗксӗр, буфетсенче закускӑсем сахал. Официанткӑсем ӗҫсыннисемпе кӑмӑллӑн калаҫмаҫҫӗ. Первомайскинчи райпо столовӑй валли купӑста, чӗкӗнтӗр, кишӗр ҫителӗклӗ хатӗрлесе хуман. Чылай пекарньӑсем ҫӑкӑр пӗҫерес ӗҫе кирлӗ пек туса пымаҫҫӗ.

Кӑҫалхи февраль уйӑхӗнче Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн ялта суту-илӳ ӗҫне мӗнле йӗркелени ҫинчен сӳтсе явнӑ. Правительство Чӑвашпотребсоюз правленийӗ ҫителӗксӗр ӗҫленине, тавар ҫаврӑнӑш планне тултарса пыма тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнманнине, правлени тата унӑн председателӗ Балашов юлташ совет суту-илӗвӗн йӗркисене пӑснипе, ӗҫсыннисен кулленхи ыйтӑвӗсене тивӗҫтерессине хакламаннипе килӗшсе тӑнине палӑртнӑ. Анчах Чӑвашпотребсоюз правленийӗ тата Балашов юлташ ҫакӑнтан тивӗҫлӗ вывод туман, потребительсен кооперацийӗн ӗҫӗнче халӗ те пысӑк ҫитменлӗхсем пур. Чылай райпотребсоюзсенче кооперации пурлӑхне кирлӗ пек упрамаҫҫӗ. Пӗчӗк ялпосене пӗрлештернӗ хыҫҫӑн нумай райпотребсоюзсен финанс хуҫалӑхӗ тӗрекленнӗ. Анчах чылай ҫӗрте хуҫасӑрлӑха пӗтермен, 9 ялпо тупӑшлӑ ӗҫлемест. Кадрсем суйласа илес тата вӗсене воспитани парас ӗҫе йӗркелемен.

1952 ҫулта Чӑвашпотребсоюз правленийӗн номенклатуринче тӑракан работниксенчен 29 процентӗ улшӑннӑ. Уйрӑмах таварсемшӗн ответлӑ ҫынсем час-часах улшӑнаҫҫӗ. Халиччен растрата тунӑ, тӳрӗ мар ҫынсене ӗҫе илес йӑлана пӗтермен. Райпотребсоюзсемпе райпо председателӗсенчен виҫҫӗшӗ ҫеҫ суту-илӳ техникумӗнчен вӗренсе тухнӑ, 91 ялпо председателӗнчен пӗр ҫын ҫеҫ вӑтам шкултан вӗренсе тухнӑ. Ҫавӑнпа Чӑвашпотребсоюз правленийӗн кадрсен ӑсталӑхне ӳстерес, вӗсене воспитани парас ӗҫе уйрӑмах вӑйлатма тӑрӑшас пулать.

Нумай райпотребсоюзсемпе ялпо руководителӗсем государство дисциплинине тата пайщиксен наказӗсене пурнӑҫлассишӗн тивӗҫлӗ ответлӑх туймаҫҫӗ. Чӑвашпотребсоюз правленийӗ тата потребительсен кооперацийӗнче ӗҫлекенсен профсоюзӗн обкомӗ суту-илӳ работникӗсем хушшинче социализмла ӑмӑрту анлӑн сарма, малта пыракан коллективсемпе работниксен опычӗпе меслетне пӗтӗҫтерсе сарма тӑрӑшмаҫҫӗ.

1953 ҫулта потребительсен кооперацийӗ умӗнче пысӑк та ответлӑ задачӑсем тӑраҫҫӗ: тавар ҫаврӑнӑшӗ чылай ӳсмелле, ҫӗнӗ магазинсем, столовӑйсем, пекарньӑсем, складсем тумалла. Халӗ колхозсен уй-хирӗсенче хӗрӳллӗ ӗҫ вӗресе тӑрать, строительство сарӑлса ырать. Колхозниксемпе механизаторсен кулленхи ыйтӑвӗсене пӳр енчен те тивӗҫтересси, колхозсем валли производствӑра тата хуҫалӑхра кирлӗ таварсем ытларах кӳрсе килесси — потребительсен кооперацийӗн задачи. Магазинсенче, ларексенче йӗркелӗх тата тасалӑх пултӑр, ӗҫсыннисем хӑйсене кирлӗ таварсене кирлӗ вӑхӑтра илсе тӑма пултарччӑр.

Торгплодоовощь системине пӗтернӗ хыҫҫӑн, пахча ҫимӗҫпе ҫӗрулми хатӗрлес тӗлӗшпе потребительсен кооперацийӗн пысӑк ӗҫ тумалла. Ҫӗрулми тата пахча ҫимӗҫ вырнаҫтарма овощехранилищӗсем, складсем тумалла, тарасем вӑхӑтра хатӗрлесе хумалла, кадрсем тупса вӗрентмелле.

Прение тухса калаканосем Чӑвашпотребсоюз правленийӗн ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пуррине палӑртрӗҫ. Пӑрачкаври райпотребсоюзӑн председателӗ Маненков юлташ суту-илӳ работникӗсем хушшинче социализмла ӑмӑрту анлӑн сарӑлманни, потребительсен кооперацийӗнче ӗҫлекенсен профсоюзӗн обкомӗ месткомсене сахал пулӑшни, унӑн председателӗ Григорьева юлташ вырӑна сайра хутра ҫеҫ тухса ӳрени ҫинчен чарӑнса тӑчӗ.

Сӗнтӗрвӑррири райпотребсоюз председателӗ Шипунов юлташ Чӑвашпотребсоюз правленине Сӗнтӗрвӑрринче ҫӗнӗ магазин тата пекарня тума ҫителӗксӗр пулӑшнӑшӑн критиклет. Вӑл колхозниксемпе колхозсем валли строительство материалӗсем, ут таврашӗсем, культура таварӗсем нумайрах кӳрсе килме сӗнет.

Самолетов, Малышев, Федоров юлташсем чылай апат-ҫимӗҫ комбиначӗсем, райпромкомбинатсем тата промартельсем япах продукци туса кӑларнине, апат-ҫимӗҫ продукчӗсене япах ещӗксемпе ӑсатнине, ӗҫсыннисен ыйтӑвӗсене кирлӗ пек тивӗҫтерме тӑрӑшманнине палӑртрӗҫ.

Шӑмӑршӑри райпо председателӗ Леонтьев юлташ вырӑнта туса кӑларакан таварсем туянса сутас тӗлӗшпе райпо правленийӗ пухнӑ хӑшпӗр опыт ҫинчен каларӗ. Кӑҫал райпо вырӑнти промышленность предприятийӗсемпе тата промартельсемпе ҫур миллион тенкӗлӗх ытла тавар туянма договор тунӑ.

Варакинпа Камаев юлташсем Мордва республикинчи потребительсен кооперацийӗн ӗҫӗпе опычӗ ҫинчен каласа пачӗҫ.

Пухура Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн председателӗ И. Афанасьев юлташ тухса каларӗ.

Пуху кооперации работникӗсен активӗпе пӗрле 1953 ҫулхи тавар ҫаврӑнӑш планне срокчен тултарма, планран иртерсе 4 миллион тенкӗлӗх тавар сутма, плана кашни райпотребсоюз, ялпо тата магазин енӗпе тултарма, ялта тата хуласенче культурӑлла суту-илӗве анлӑн сарма, кашни работника ӑмӑртӑва хутшӑнтарма, малта пыракансен опычӗпе пурне те пайлаштарма пулса обязательство йышӑнчӗ, Мордва тата Мари республикисенчи потребительсен кооперацийӗнче ӗҫлекенсемпе ӑмӑртма пулчӗ.

КОРЕЙӐРИ ӖҪСЕМ

Халӑх ҫарӗн Главнӑй командованийӗ пӗлтерни

ПХЕНЬЯН, майӑн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн Главнӑй командованийӗ паян ҫапла пӗлтерет: иртнӗ кун хушшинче фронтсенче уйрӑм улшӑнусем пулман.

Майӑн 13-мӗшӗнче ҫӗрле Америка самолечӗсем тӑватӑ хутчен Суань водохранилищин пӗви ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Ҫакӑн пек тискеррӗн тапӑннипе пӗвене ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, шыв уй-хирсене тапса тухнӑ, хресченсен ҫурчӗсем шыв айне пулнӑ. Шыв тулнипе ҫӗрпер вӑт ҫынсем, хӗрарӑмсем, ачасем инкек курнӑ.

Халӑх ҫарӗн зенитнӑй чаҫӗсем тата самолетсене хирӗҫ кӗрешекен салтаксем паян тӑшманӑн 2 самолетне персе ӳкернӗ, 7 самолетне сиен кӳнӗ.

ПХЕНЬЯН, майӑн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх ҫарӗн Главнӑй командованийӗ паян ҫапла пӗлтерет: иртнӗ кун хушшинче фронтсенче уйрӑм улшӑнусем пулман.

Майӑн 14-мӗшӗнче ҫӗрле Америка самолечӗсем Сарибонь тӑрӑхӗнчи мирлӗ халӑх пурӑнакан ялсем ҫине тепӗр хут тапӑннӑ. Майӑн 15-мӗшӗнче ирхине тӑшманӑн 140 ытла истребителӗ Намхке сывӑхӗнчи ялсем ҫине тапӑннӑ. Мирлӗ халӑх хушшинче вилсе тата аманса пӗтнисем нумай, пурӑнмалли чылай ҫуртсем ишӗлнӗ тата ҫунса кайнӑ.

Халӑх ҫарӗн зенитнӑй чаҫӗсем тата самолетсене хирӗҫ кӗрешекен салтаксем паян тӑшманӑн 4 самолетне персе ӳкернӗ.

Корейӑра перемири ҫинчен пыракан калаҫусем

ПЕКИН, майӑн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчӗ Кэсонран Корейӑпа Китай делегацийӗ майӑн 14-мӗшӗнче пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӗве парать.

Майӑн 14-мӗшӗнче икӗ енӗн делегацийӗсен ларӑвӗ пулнӑ. Ларура Корейӑпа Китай делегацийӗн пуҫлӑхӗ генерал Нам Ир тепӗр енӗ апрелӗн 13-мӗшӗнче панӑ сӗнӗве анализ тунӑ. Перемири тунӑ хыҫҫӑн сийӗнчех Кӑнтӑр Корейӑра «вырӑнта ирӗке кӑларни» текипе тӳрех репатриаци туман тыткӑнри корейцсен кун-ҫулне татса парасси ҫинчен тепӗр енӗ тӑратнӑ сӗнӳ, тенӗ генерал Нам Ир, тӗрӗссипе, тыткӑнри ҫар ҫыннисене уҫҫӑнах вӑйпа тытса чармалла тӑвассине шутра тытать. Нейтральнӑй государствӑсен представителӗсенчен уйӑрнӑ комисси аллинче икӗ уйӑх хушши тӑнӑ хыҫҫӑн та хӑйсене репатриаци тума ыйтман тыткӑнри корейц мар ҫар ҫыннисен кун-ҫулӗ ҫинчен тӑракан ыйтӑва Кӑнтӑр Корейӑра «вырӑнта ирӗке кӑларнипе» татса парас тӗлӗшпе тепӗр енӗ тӑратнӑ сӗнӳ те, тӗрӗссипе, тыткӑнри ҫар ҫыннисене вӑйпа тытса чармалла тӗллев тытать. Тепӗр енӗ репатриаци тӗлӗшпе ӗҫлеме нейтральнӑй государствӑсен представителӗсенчен уйӑрнӑ комиссие вӑйсӑрлатма тӑрӑшать, ӑна законлӑ функцисене пурнӑҫлама май парасшӑн мар. Кунсӑр пуҫне тата тепӗр енӗ тӑратнӑ сӗнӳ тӳрех репатриаци туман тыткӑнри ҫар ҫыннисем хушшинче интересленекен ҫӗршыв енчен ӑнлантару ӗҫне тума пӳлсе хурас тӗлӗшпе нимӗнле сӑлтавсӑр тӗрлӗ чӑрмавсем туса хума пӑхать. Тепӗр енӗ тӑратнӑ сӗнӗвӗн тӗп пункчӗсенче каланӑ тӗп принцип пӗр тӗллев кӑна тытать, вӑл тӗллев — тыткӑнри ҫар ҫыннисене вӑйпа тытса чарасси. Ҫак сӗнӳ Корейӑпа Китай делегацийӗ майӑн 7-мӗшӗнче тӑратнӑ сӗнӳпе нихӑш енчен те сыхӑнса тӑмасть. Корейӑпа Китай делегацийӗ тепӗр енӗ майӑн 13-мӗшӗнче тӑратнӑ сӗнӗве татӑклӑн сирсе пӑрахнӑ.

Генерал Нам Ир икӗ енӗн делегацийӗсене Корейӑпа Китай делегацийӗ тӑратнӑ сӗнӗве хӑвӑртрах йышӑнма сӗннӗ. Анчах та тепӗр енӗ ҫаплах хӑй йышӑннӑ позицие хӳтӗленӗ, репатриаци тӗлӗшпе ӗҫлекен комиссие кӗртме палӑртнӑ нейтральнӑй государствӑсем пирки элеклӗ сӑмахсем каласа пӗтернӗ. Ҫак государствӑсен кандидатури ҫинчен тӑракан ыйтӑва пӗр-пӗринпе килӗшнӗ тӑрӑх татса памалла, вӗсен представителӗсене икӗ енӗн пӗрле чӗнмелле. Тепӗр енӗн делегацийӗ ҫапла каланӑ: репатриаци тӗлӗшпе ӗҫлекен комиссие кӗмелли нейтральнӑй государствӑсен ытларахӑшӗ, тен, Корейӑпа Китай енӗн влиянинче тӑрать. Ҫак сӑлтавпа тепӗр енӗ Корейӑпа Китай делегацийӗн сӗнӗвне — асӑннӑ комиссин решенисене ытларахӑш сасӑпа йышӑнмалла тесе панӑ сӗнӗве — хирӗҫ тухса каланӑ.

Генерал Нам Ир татӑклӑн ҫапла каланӑ: тепӗр енӗ ҫакнашкал позици тытни перемири ҫинчен пыракан калаҫусене ӑнӑҫлӑ иртерме пулӑшмасть. Репатриаци тӗлӗшпе ӗҫлекен комисси членӗсем — нейтральнӑй государствӑсем ҫинчен тепӗр енӗ кӳрентерекен сӑмахсем калани — нейтральнӑй государствӑсен представителӗсенчен уйӑрнӑ комисси хӑйӗн ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑ туса пыма пултартӑр, тесе тепӗр енӗ тӑрӑшманни ҫинчен калать. Ҫакӑ вӑл тӳрех репатриаци туман тыткӑнри ҫар ҫыннисене, вӗсене вӑйпа тытса чарас тӗллевпе, хӑйсен контролӗпе влиянийӗнчен вӗҫертмелле мар тӑвас тӗллевпе тепӗр енӗ туса хатӗрленӗ плана тӑрӑ шыв ҫине кӑларать.

Юлашкинчен генерал Нам Ир ҫапла каланӑ: Корейӑпа Китай делегацийӗ тӗрӗс те практикӑллӑ икӗ сӗнӳ тӑратрӗ. Ҫак сӗнӳсене пурнӑҫланипе тыткӑнри ҫар ҫыннисем ҫинчен тӑракан ыйтӑва халех татса пама тата Корейӑра перемири тума пулать. Тепӗр енӗн хӑйӗн позицине улӑштарас пулать, Корейӑпа Китай делегацийӗ тӑратнӑ сӗнӗве йышӑнмалла, Корейӑра перемири тӑвас пулать, тенӗ генерал Нам Ир.

Ситес лару майӑн 15-мӗшӗнче ирхине 11 сехетре пулать.

ПЕКИН, майӑн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчӗ Кэсонран Корейӑпа Китай делегацийӗ майӑн 15-мӗшӗнче пичетлесе кӑларнӑ ҫакӑн пек пӗлтерӗве парать:

Майӑн 15-мӗшӗнче пулнӑ ларура Корейӑпа Китай делегацийӗн пуҫлӑхӗ генерал Нам Ир тепӗр енӗ майӑн 13-мӗшӗнче тӑратнӑ сӗнӗве пӗтӗмӗшлӗн пӑхса тухнӑ. Ҫак сӗнӗвӗн тӗп положенийӗсем, тенӗ генерал Нам Ир, тыткӑнри ҫар ҫыннисене вӑйпа тытса чарас принцип ҫинче никӗсленсе тӑраҫҫӗ. Ҫакӑнпа Корейӑпа Китай делегацийӗ ниепле те килӗшме пултараймасть. Тӳрех репатриаци туман тыткӑнри корейцсене тепӗр енӗн контролӗнче тӑракан районта — «вырӑнта ирӗке кӑлармалла» тени вӑл икӗ енӗ хальхи вӑхӑтра пыракан калаҫусенче килӗшсе татӑлнӑ никӗсе пӗтӗмпех хавшатать. Ҫак килӗшӳ тӑрӑх, тӳрех репатриаци туман тыткӑнри ҫар ҫыннисене сийӗнчех нейтральнӑй государствӑсен представителӗсенчен уйӑрнӑ организаци аллине памалла.

Корейӑпа Китай енӗ яланах ҫапла шутланӑ тата халӗ те ҫапла шутлать, тенӗ генерал Нам Ир: ыйтусене пӗр-пӗринпе консультаци тунӑ тӑрӑх тата икӗ енӗ те калаҫса татӑлнӑ никӗс ҫинче татса памалла. Корейӑпа Китай енӗ пысӑк вӑй хурса ӗҫлерӗ, халӗ те нумай вӑй хурать. Вӑл икӗ конкретлӑ сӗнӳ тӑратрӗ. Халӗ ыйту ҫапла тӑрать, тенӗ малалла генерал Нам Ир, тепӗр енӗ ҫак никӗсе тепӗр хут пӗтерсе лартма тӑрӑшать. Вӑл Корейӑпа Китай енӗн тӳрех репатриаци туман тыткӑнри ҫар ҫыннисене мӗнле майпа та пулсан вӑйпа тытса чарма шутлать, Паллах, тенӗ генерал Нам Ир, Корейӑпа Китай енӗ ҫакӑнпа килӗшме пултараймасть.

Ларура тепӗр енӗн делегацийӗ хӑйӗн сӗнӗвӗн хӑшпӗр положенийӗсене хӳтӗлеме пӑхнӑ. Анчах та вӑл хӑйӗн делегацийӗ тӗп ыйтусем тӑрӑх йышӑннӑ позицие тӳрре кӑларма нимӗнле вырӑнлӑ сӑлтав та илсе кӑтартма пултараймаҫ. Генерал Нам Ир: тепӗр енӗн хӑйӗн позицине улӑштарас пулать, ҫапла вара икӗ енӗн делегацийӗсен Корейӑпа Китай делегацийӗ майӑн 7-мӗшӗнче тӑратнӑ сӗнӗве йышӑнмалла, Корейӑра перемири тӑвас тӗллевпе конкретлӑ ыйтусене пӑхса тухма тытӑнмалла, тенӗ.

Икӗ енӗ те майӑн 16-мӗшӗнче ирхине 11 сехетре тепӗр хут тӗл пулма килӗшнӗ.

Корейӑри тӗп телеграф агентстви пӗлтерни

ПХЕНЬЯН, майӑн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Корейӑра тухса тӑракан хаҫатсем Корейӑри перемири ҫинчен пыракан калаҫусем пирки нумай ҫыраҫҫӗ. Вӗсем ҫакна палӑртаҫҫӗ: Америка делегацийӗ калаҫусене тепӗр хут нумай вӑхӑта тӑсас тӗлӗшпе тытакан позицие пӑрахӑҫласан кӑна калаҫусем ӑнӑҫлӑ вӗҫленме пултараҫҫӗ.

Паян Корейӑри тӗп телеграф агентстви хӑйӗн корреспонденчӗ Паньмыньчжоньран пӗлтернине пичетлесе кӑларнӑ. Майӑн 14-мӗшӗнче пулнӑ ларура, — тенӗ ҫак пӗлтерӳре, — Гаррисон ҫаплах: Америка делегацийӗ кӑларса тӑратнӑ чылай пӗчӗк ыйтусем «питӗ кирлӗ» ыйтусем пулса тӑраҫҫӗ, теме пӑрахман. Ҫав ыйтусем ҫинчен «тӗплӗн ӑнлантарса панӑ ответсем» илмчен, тенӗ вӑл, Америка делегацийӗ тӗп ыйтусене пӑхса тухас ӗҫе тытӑнма пултараймасть. Ҫакӑ вӑл калаҫусене тепӗр хут нумай вӑхӑта тӑсма хӑтланнине, Корейӑра перемири тӑвассине тӑсса пыма тӑрӑшнине пӗлтерет.

Тата ҫак питех те тӗлӗнтерет: юлашки пилӗк кун хушшинче Гаррисон калаҫусем иртерме чӑрмантарнӑ вӑхӑтрах, тӑшман чылай пысӑк провокациллӗ ӗҫсем тунӑ. Майӑн 9-мӗшӗнче Америка авиацийӗ Увачири тыткӑнри ҫар ҫыннисен 4-мӗш лагерӗ ҫывӑхне 48 бомба пӑрахнӑ. Ҫавна пула 11 ҫын аманнӑ тата ҫуртсем нумай ишӗлнӗ. Майӑн 10-мӗшӗпе 11-мӗшӗнче Америкӑн ҫар самолечӗсем Сурҫӗр-Хӗвелтухӑҫ Китайри ялсемпе хуласем ҫине, вӑл шутра Андун хули ҫине тапӑннӑ. Ҫакна пула 250 ҫын ытла вилнӗ е аманнӑ.

Мӗнпур ҫӗршывсенчи халӑхсем Корейӑра хӑвӑртрах перемири тӑвасса кӗтсе пурӑнаҫҫӗ. Америка енӗ сӑмахпа мар, ӗҫпе Корейӑра мир тума тӑрӑшать пулсан, унӑн Корейӑпа Китай делегацийӗ майӑн 7-мӗшӗнче панӑ сӗнӗве йышӑнас пулать, провокацисем тума пӑрахас пулать, тӗп ыйтусене сӳтсе явма тытӑнас пулать.

Анри Барбюс

(Ҫуралнӑранпа 80 ҫул ҫитнӗ тӗле)

Совет ҫыннисем, Францири ӗҫсыннисемпе пӗрле, мирпе демократишӗн кӗрешекенсен хӑватлӑ юхӑмне хутшӑннӑ тӗнчери ырӑ шухӑшлӑ мӗнпур ҫынсемпе пӗрле, Анри Барбюс ятне юратса тата хисеплесе асӑнаҫҫӗ. Барбюс — Франци халӑхӗн мухтавлӑ ывӑлӗ, чаплӑ писатель-коммунист. Капитализмла строя пӗр шеллемесӗр тӑрӑ шыв ҫине кӑларса, империализмла вӑрҫӑсемпе фашистла тискерлӗхе хирӗҫ кӗрешсе, вӑл хӑйӗн творчествӑлла пӗтӗм вӑйне халӑх ӗҫӗшӗн панӑ. Барбюсӑн общество пурнӑҫӗпе политика ыйтӑвӗсем тӗлӗшпе ҫырнӑ статьисем, унӑн «Чӑнлӑха кӑтартакан повеҫӗсем», Совет Союзӗнчи халӑхсен чӗлхи ҫине куҫарса кӑларнӑ «Вут-хӗм» тата «Таса ҫутӑ» ятлӑ романӗсем пирӗн ҫӗршыври нумай миллионлӑ массӑсен пуянлӑхӗ пулса тӑраҫҫӗ.

Политикӑлла пурнӑҫран пӑрӑнса тӑнӑ вак-буржуаллӑ интеллигенци ҫемйинчен тухнӑ Барбюс хӑйӗн творчествӑлла ӗҫӗн пуҫламӑшӗнче пурнӑҫпа, ӗҫхалӑхӗн кӗрешӗвӗпе ҫыхӑнса тӑман. Иртнӗ ӗмӗрӗн 90-мӗш ҫулӗсенче ҫырнӑ сӑввисем унӑн хӗн-хур куракансене хӗрхеннинчен иртеймен. Анчах ҫамрӑк писателе унӑн малтанхи опычӗсем те ҫав ҫулсенче литературӑра ӗҫлесе пурӑннӑ ытти ҫынсенчен — хӑйсем массӑсенчен уйӑрӑннине пур майсемпе те палӑртма тӑрӑшнӑ буржуаллӑ декадентсенчен татӑклӑнах уйӑрса тӑнӑ. Барбюсӑн ҫак ӗмӗр пуҫламӑшӗнче ҫырнӑ «Тархаслакансем», «Тамӑк», «Эпир — урӑххисем» ятлӑ произведенийӗсем те унӑн ҫамрӑк чухнехи лирикинчен нумай уйрӑлса тӑмаҫҫӗ.

Барбюс 1914—1918 ҫулсенчи империализмла вӑрҫӑра писӗхсе революциллӗ пысӑк писатель пулса тӑнӑ, ӑна демократиллӗ анлӑ ушкӑнсем ӑшшӑн йышӑннӑ. Окопсенче тата фронт ҫывӑхӗнчи госпитальте вӑл хӑйӗн тӑван ҫӗршывӗнчи ахаль ҫынсемпе — хӑй пекех салтак шинеллӗ тӑхӑннӑ рабочисемпе, хресченсемпе, ремесленниксемпе туслашнӑ. Барбюс йывӑрлӑхсемпе хӑрушлӑхсене вӗсемпе пӗрле тӳссе иртернӗ кӑна мар, халӑхшӑн кирлӗ мар вӑрҫа хирӗҫ, ҫав вӑрҫа пуҫласа яракансене тата салтак юнӗпе пысӑк мул пухакансене хирӗҫ те рабочисемпе, хресченсемпе, ремесленниксемпе пӗрлех тӑрӑхнӑ.

Ун чухне писатель-шовинистсем, империалистсен интересӗсене хӳтӗлесе, вӑрҫӑ шавне пур майсемпе те ӳстерсе пынӑ, тӗнче вӑрҫин сӑлтавӗсене те, тӗллевӗсене те ӑнланса илме тӑрӑшман буржуаллӑ пацифистсем «кирек мӗнле вӑрҫӑ та» кирлӗ марри ҫинчен усӑсӑр палканӑ. Барбюс вара ҫав вӑхӑтра хӑйӗн «Вут-хӗм», «Таса ҫутӑ» ятлӑ романӗсенче 1914—1918 ҫулсенчи вӑрҫӑн империализмла тӗллевне уҫса палӑртнӑ, вӑрҫа пӗтерме тата ҫирӗп мир ҫӗнсе илме пултаракан чӑн-чӑн вӑй массӑсен революциллӗ юхӑмӗ пулнине кӑтартса панӑ. А. М. Горький Барбюсӑн «Вут-хӗм» романне «хӑрушӑ та савӑнӑҫлӑ кӗнеке» тесе ят панӑ, вӑл унӑн кашни страници «чӑнлӑхӑн тимӗр мӑлатукӗ вӑрҫӑ суратакан мӗнпур ултава, икӗпитлӗхе, хаярлӑха, тасамарлӑха, юн юхтарнине пырса ҫапни пулать», тенӗ. В. И. Ленин «III-мӗш Интернационал задачисем ҫинчен» ятлӑ хӑйӗн ӗҫӗнче ҫапла ҫырнӑ: «Вут-хӗм» тата «Таса ҫутӑ» романсенче «пачах нимӗн те пӗлмен, идейӑсемпе тӗпнмӗшсем пӗтӗмпех пусӑрса лартнӑ обывательпе массовик шӑпах вӑрҫӑ влиянине пула революционер пулса тӑнине ҫав тери вӑйлӑ, талантлӑ, тӗрӗс кӑтартса панӑ» (Соч., 29 том, 470 стр.).

Вӑрҫа хирӗҫле тема Барбюс творчествинче малашнехи ҫулсенче те тӗп темӑсенчен пӗри пулнӑ. Миршӗн кӗрешесси унӑн обществӑлла пысӑк ӗҫӗнче тӗп вырӑн йышӑнса тӑнӑ. «Вӑрҫа пӗтерес тесен, ӑна ҫуратса кӑларакан капитализма пӗтерес пулать», — тесе ҫырнӑ Барбюс 1919 ҫулта.

Ҫапӑҫу хирӗнче тупӑсем кӗрлеме чарӑнсанах Барбюс «Вӑрҫӑ участникӗ пулнисен республикӑри ассоциацине» организациленӗ, салтак пулнӑ ҫынсене ҫав организацие хутшӑнтарнӑ, вӗсене чӑн-чӑн демократишӗн пыракан политикӑлла кӗрешӳ ҫулӗ ҫине кӑларнӑ. 1919 ҫулта Барбюс мире тата ҫамрӑк Совет республикине империалистсен интервенцийӗнчен хӳтӗлеме чӗнекен лозунгпа пӗтӗм тӗнчери писательсен «Кларте» ятлӑ пӗрлешӗвне организациленӗ, унпала вӑл тӗрлӗ наци ҫыннисем пулнӑ, тӗрлӗ политикӑна ӗненсе пурӑннӑ литераторсене пӗрлехи задачӑсемшӗн кӗрешӗве пӗтӗҫтерме тӑрӑшнӑ.

1923 ҫулта Коммунистсен партине кӗнӗ хыҫҫӑн, Барбюс хӑйӗн литература ӗҫӗсемпе обществӑлла ӗҫӗсене пӗтӗмпех парти лозунгӗсемпе задачисене пӑхӑнтарнӑ.



Октябрьти Социализмла Аслӑ революци Барбюсӑн мировоззренине тата творчествине питех те пысӑк влияни панӑ. Россиӑра Октябрьти революци ҫӗнтернӗ хыҫҫӑн малтанхи кунсенчен пуҫласа хӑйӗн чӗри тапма чарӑниччене Барбюс Совет Союзӗн шанчӑклӑ тусӗ пулнӑ. Вӑл пирӗн мӗнпур тӑшмансене, реакциллӗ белогвардейщинӑпа унӑн ют ҫӗршывсенчи хӳтӗлекенӗсенчен пуҫласа фашистла агрессорсем таранччене, ылханса питленӗ. «Советсен социализмла республикин ялавӗ... вӑл — ҫынсене ирӗке кӑлармалли ялав пулса тӑрать», — тесе ҫырнӑ Барбюс 1919 ҫулта. ССР Союзӗ ҫӗр чӑмӑрӗ ҫинчи мӗнпур ӗҫсыннисен шанчӑкӗпе хӳтлӗхӗ пулнине ӑнланса, писатель унӑн пурнӑҫне, унӑн колхозӗсемпе ҫӗнӗ стройкисем вӑйлӑ ӳснине, Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе социализм тӑвакан совет ҫыннисен творчествӑлла ҫитӗнӗвӗсене савӑнса, хӗпӗртесе сӑнаса тӑнӑ.

Барбюс Совет Союзӗнчи нумай хуласене ҫитсе курнӑ, Кавказ леш енче тата Украинӑра пулнӑ, Днепрогэса ӗҫе янӑ ҫӗрте пулнӑ, Октябрьти революци 17 ҫул тултарнӑ кун Хӗрлӗ площадьри парадпа демонстрацие курнӑ. «Ҫакна ҫирӗп шанатӑп: эпӗ Совет Союзӗ пур облаҫсенче те пуса пыракан творчествӑлла ӗҫпе тарӑнрах паллашни манӑ пулас этемлӗхӗн ҫутӑ идеалӗсемшӗн тата вӑйлӑрах та анлӑрах кӗрешсе пыма ҫӗклентерӗ», — тенӗ вӑл.

«Горький тата эпир» ятлӑ статьяра, хӑйӗн ытти хӑшпӗр ӗҫӗсенче те Барбюс тӗнчери малта пыракан писательсен пурин те Горькирен вӗренмелли ҫинчен, «пур ҫӗртен те курӑнса тӑракан ҫав пысӑк сӑрт-тупала» танлашмалли ҫинчен каланӑ. «Сталин» ятлӑ кӗнекере вӑл «ку чухнехи совет литератури ирӗклӗхре хӑйсем иккӗмӗш хут ҫуралнине курнӑ ҫынсен хастарлӑ ӗҫӗсем ҫинчен калакан геройла эпос пулса пынине» кӑтартса панӑ. Советла социализмла культура питӗ пысӑк ҫитӗнӳсем туни унӑн аталанӑвне Коммунистсен партийӗ ертсе пыниччен килнине Барбюс лайӑх курса тӑнӑ.

Фашизма хирӗҫ кӗрешнӗ Барбюсӑн пӗтӗм активлӑ ӗҫӗ мирпе демократишӗн кӗрешес лозунгпа, пусмӑрпа чуралӑха хирӗҫ кӗрешме тӗнчери пӗтӗм общественноҫа пӗрлештерес лозунгпа аталанса пынӑ. 20-мӗш ҫулсенче вӑл Болгарипе Румынире пулнӑ, унта ҫав вӑхӑтра фашистла террор иртӗннӗ, унта пулнӑ тӗлӗнмелле фактсене пӗтӗҫтерсе, вӑл фашизма хирӗҫ кӗрешме чӗнекен произведени — «Палачсем» ятлӑ кӗнеке кӑларнӑ. Барбюс Европӑри чылай ҫӗршывсен столицисенче Балканти шурӑ террор хӗн-хур кӑтартнӑ ҫынсене пулӑшмалли комитетсем организациленӗ, тӳрӗ кӑмӑллӑ мӗнпур ҫынсене фашизм чуралӑхне хирӗҫ кӗрешӗве пӗтӗрме чӗннӗ. Хӑйӗн «Чӑнлӑха кӑтартакан повеҫӗсенче» вӑл Балканти полициллӗ тискер ӗҫсене ылханса тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ, хӑюллӑн та паттӑррӑн кӗрешекен коммунистсене мухтанӑ, вӗсен хурӑ пек ҫирӗп хӑватне темле тискеррӗн асаплантарни те хуҫма пултарайманнине кӑтартса панӑ.

1932 ҫулта Барбюс Амстердамра Пӗтӗм тӗнчери вӑрҫа хирӗҫле конгресс пухас ӗҫе пуҫарса яракансенчен пӗри пулнӑ. 1933 ҫулта вӑл Парижра Пӗтӗм тӗнчери ҫамрӑксен конгресӗнче председатель пулнӑ, ҫав конгресс фашистла агрессие хирӗҫ активлӑ кӗрешӳ организацилес задача лартнӑ. Хӑй виличчен темиҫе уйӑх маларах кӑна, 1935 ҫулхи июльте, Анри Барбюс Пӗтӗм тӗнчери фашизма хирӗҫле писательсен культурӑна хӳтӗлес тӗлӗшпе пухӑннӑ конференцийӗн ӗҫне активлӑ хутшӑннӑ. Тӗнчери малта пыракан пӗтӗм общественность фашизм тӗрмине хупса лартнӑ Димитровпа Тельмана ирӗке кӑларма ыйтнӑ кунсенче Барбюс-публицистӑн сасси хӑватлӑн янӑраса тӑнӑ.

Писателӗн юлашки ҫулсенчи публицистикӑлла статьисем — «Ӗнерхи вӑрҫӑ — ыранхи вӑрҫӑ», «Европӑри вӑрҫа чарса тӑни пӗтӗм тӗнчери мире хӳтӗлени пулать», «Вӑй-халпа ӑс-тӑн ӗҫӗн работникӗсене» тата ыттисем те — фашистла агрессие хирӗҫ кӗрешекенсемшӗн паха хӗҫпӑшал пулса тӑнӑ.

Францин нациллӗ литературин чи лайӑх йӑлисем ҫине таянса, Барбюс Францири критикӑлла реализмӑн чи пысӑк представителӗсен — буржуаллӑ тӗнчен тискер кайӑкла моральне питленӗ Стендалӗн, Бальзакӑн, Эмиль Золян тата ыттисен йӑлисене малалла туса пынӑ кӑна мар, пусмӑрписем пусмӑрлакансене хирӗҫ кӗрешнине кӑтартса памалли ҫӗнӗ ӗҫ пуҫарса янӑ. Барбюс ют ҫӗршывсенче вӑрҫӑпа фашизма хирӗҫ кӗрешекенсен малти ретӗнче пыракан герой-коммунистсен сӑнарӗсене кӑтартса парас задачӑна чи малтан хӑйсем ҫине илнӗ писательсенчен пӗри пулнӑ. Барбюсӑн теориллӗ ӗҫӗсем — «Совет литератури», «Революциллӗ писательсемпе художниксен манифечӗ», «Литературӑлла халал» тата ыттисем те Францири малта пыракан писательсене социализмла реализм литературине тума чӗнсе каланисем пулса тӑраҫҫӗ.

Францири хальхи вӑхӑтра малта пыракан писательсем — Луи Арагон, Сталинла премин лауреачӗ Андрэ Стиль тата ыттисем те хӑйсене тивӗҫлипех Барбюсӑн ӳченикӗсем тата унӑн ӗҫне малалла туса пыракансем тесе шутлаҫҫӗ. Францири писатель-коммунистсем, мир конгресӗсен трибунисем ҫинчен тухса каласа, Коммунистсен партийӗн авторитетне сӑмахпа та, ӗҫпе те ӳстерсе пырса, Барбюс кӗрешӳре тытса пынӑ ялава тивӗҫлипе малалла ҫӗклесе пыраҫҫӗ. «Эпир Барбюсӑн «Вут-хӗм» кӗнекинчен илнӗ урока манмӑпӑр. — Аслӑ писателӗн — Барбюсӑн Сталин ҫинчен ҫырнӑ юлашки кӗнекинчен илнӗ урока, вӑл пире вӑрҫӑпа фашизма хирӗҫ кӗрешессине пурнӑҫа кӗртекен ҫынна ӗненме тата юратма вӗрентнӗ кӗнекерен илнӗ урока эпир манмӑпӑр», — тенӗ Луи Арагон.

Барбюс пирӗнтен уйрӑлса кайнӑранпа чылай ҫирӗм ҫул ҫитет. Анчах та вӑл хӑйӗн пӗтӗм ҫулӑмлӑ пурнӑҫне панӑ ӗҫе малалла туса пыракансем хушшинче яланлӑхах чӗрӗ юлчӗ.

М. ЯХОНТОВА,
филологи наукисен кандидачӗ.

Премьер-министр Черчилль Англири общинăсен палатинче тухса калани

ЛОНДОН, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет:

Уинстон Черчилль, премьер-министр ĕçĕсене туса пынипе пĕрлех Иден чирленĕ вăхăтра ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн ĕçĕсене туса пыраканскер, паян общинăсен палатинче тулашри политика çинчен доклад турĕ. Черчилль общинăсен палатинче тулашри политика тĕлĕшпе икĕ куна пыракан прениесене пуçларĕ. Черчилль тухса калама хатĕр пулман пирки прениесем пуçлассине икĕ хутчен тепĕр вăхăта хăварнă пулнă.

Лейбористсен оппозицийĕ халлĕхе правительствăн тулашри политикине хирĕçлеме хатĕрленмест. Çавăнпа та прениесем хыççăн сасăламаççĕ пулмалла.

Черчилль сăмах пуçламăшĕнче çапла пĕлтернĕ: Идена икĕ хутчен операци тунă, вăл темиçе уйăх хушши ĕçлес çук. Черчилль çавăн пекех хăй, ют çĕршыв ĕçĕсен государство министрĕ Селвин Ллойд тата ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн икĕ заместителĕ пулăшнипе, Иден ĕçĕсене малалла та туса пырасси çинчен пĕлтернĕ. «Çакă вăл маншăн ытлашши йывăр ĕç пулни палăрсан, эпĕ пулăшу ыйтăп»,— тесе хушса хунă Черчилль.

«Тулашри политикăн ĕçĕсемпе,— тенĕ малалла Черчилль,— эпĕ тĕпрен илсен, кĕнекесем е документсем тăрăх мар, нумай çулсем хушши çак тĕлĕшпе хам ĕçленипе паллашнă».

Тулашри политика çинчен калама пуçласан, Черчилль малтанах Корея çинчен чарăнса тăнă. Вăл çапла каланă: «Пирĕн чи çывăх тĕллев, паллах, Корейăра перемири тăвасси пулать. Çак вăхăтра эпĕ перемири тунипе е вăрçа чарăннипе те кăмăллă пулнă пулăттăм».

Черчилль коммунистсен çĕнĕ сĕнĕвне ытăмлă пулса тата кăмăлласа пăхса тухма кирли çинчен каланă. Çав сĕнĕ сĕнӳре Корейăн тыткăнра юлакан 40 е 50 пин çыннишĕн, тăван çĕршыва таврăнма хăракан çынсемшĕн, тăрăшас задачăна пилĕк державăн хăйсем çине илмелли çинчен каланă.

Коммунистсен юлашки сĕнĕвĕ пирки Черчилль çапла пĕлтернĕ: «вĕсем килĕшӳ тумалли никĕс пулаймаççĕ тесе шутлама кирлĕ мар», тенĕ.

Индо-Китай пирки Черчилль çапла каланă: юлашки темиçе эрне хушши унта лару-тăру начарланнине питех те пăшăрханса сăнаса пычĕç. Анчах çакăн çинчен савăнса пĕлтерме пулать: халĕ, ун аллинчи сведенисем тăрăх, лару-тăру пĕр вăхăтра шутланă пекех начар мар.

Французсем йышăннă мерăсене пула тата çумăр çăвакан тапхăр пуçланнă пирки, тен, темиçе уйăхлăха шăп пулĕ. «Ман шутпа,— тенĕ Черчилль,— Вьетмин çарĕсен чаçĕсем сасартăк Сиам чикки патне куçса пынинчен пирĕн: сăмах Советсем хĕтĕртнипе тунă ĕç çинчен пырать, ку вăл Совет правительствин çĕнĕ позицийĕпе килĕшӳллĕ мар, тесе вывод тума юрамасть».

Черчилль малалла çапла каланă: «Инкеке, ку вăл çавăн пек те пулма пултарать. Анчах урăхла та пулма пултарнă. Тен, ку вăл вырăнти сăлтавсемпе çыхăннă тата темиçе уйăх каярах туса хатĕрленĕ, тен, халĕ улăштарнă плансем тăрăх пулса пырать.

Кирек мĕнле пулсан та, пирĕн лайăх мар выводсем тума васкамалла мар».

Египет ыйтăвĕ çине куçса, Черчилль çапла каланă: Персири Абадан нефть промыслисенчен эвакуаци тунă хыççăн темиçе эрнерен Египет правительстви Англипе Египет хушшинче 1936 çулта тунă договора хăй тĕллĕнех пăрахăçласси çинчен пĕлтерчĕ. «Çав договор сахалтан та 1956 çулччен вăйра пулмалла-ха».

Çапла та пулма пултарать, тенĕ малалла Черчилль, «вĕсем, çакăн пек ĕç тунипе пула, юридически тĕлĕшĕнчен, пĕтĕм тĕнчери халăхсем хушшинчи çыхăну енчен тата ырă кăмăллă пулмалли енчен хăйсем мĕн тери япăх лару-тăрура пулассине ăнланса илмен.

Ырă мар ĕç тунипе сиен куракан çĕршывăн юридически енĕпе пулакан вăйлă енĕсем пирĕн, паллах, сыхланса юлаççĕ».

Генерал Нагиб тата унăн соратникĕсем—çар çыннисем Фарук короле хăваласа яни çинчен аса илтерсе, Черчилль çапла каланă: нимĕнле суйлавсăрах генерал Нагиб Египет диктаторĕ пулса тăчĕ е ăна çавăн пек туса лартрĕç.

«Диктатор час-часах урăх çынсене пăхăнса тăрать; вăл ыттисен тĕлĕшпе мĕн тăвать, ун тĕлĕшпе те çавнах тума пултараççĕ. Çакă вăл диктатурăн начар енĕсенчен пĕри пулать»,— тенĕ Черчилль.

Вăл çапла каланă: Египетра çавăн хыççăн йывăр лару-тăру пулса тăчĕ. «Акăлчансене хĕстерсе мул пухмалли» пурте лайăх пĕлекен меслет пулăшнипе халăх хушшинче чи пысăк чап илес шутпа, диктаторпа унăн соратникĕсем çав лару-тăрупа усă курма лайăх е усă курма кирлĕ тесе шутларĕç.

Иртнĕ çулхи ноябрьте генерал Нагиб тата Каирта власра тăракан ушкăн Англие акăлчансене канал зонинчен тата «питех те пaха, хаклă тăракан базăран, пĕтĕмпех пирĕн укçа-тенкĕпе тунă базăран» илсе тухасси çинчен калаçусем пуçлама сĕнчĕç.

Англи хăй тума тивĕç ĕçе, тĕпрен илсен, хăйĕн пĕччен кăна тума тивĕç ĕçе пурнăçласа пынă, тенĕ Черчилль. Вăл тивĕç Вăтам Хĕвелтухăçĕнчи ирĕклĕ çĕршывсен интересĕсене хӳтĕлесси пулать.

Вăл çапла хушса хунă: «Çак задачăна пурнăçлама тата Египетпа килĕшӳ тунă никĕс çинче стратегилле база валли кирлĕ ĕçсене шанчăклăн туса пыма май паракан, юрăхлă килĕшӳ тăвас пулсан, çакă вăл пирĕн çынсен ресурсĕсене тата укçа-тенкĕне питех те нумай перекетленĕ пулĕччĕ.

Ку вăл пачах та акăлчансен империалистла е колонилле мероприятийĕ пулса тăмасть; çакна ăна Нордкапран пуçласа Кавказа çитиччен Çурçĕр-Атлантика союзĕн организацийĕн кашни членĕ, çавăн пекех Хĕвелтухăçĕнчи тата Вăтам Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсем тӳррĕнех интересленекен тĕллевшĕн тăваççĕ».

Черчилль унтан Германи пирки тăракан ыйту çине куçнă. Çак ыйту вăл «Европăри ытти ыйтусенчен чи пысăкки пулать», тесе паллă тунă.

Хĕвелтухăç Германи, тенĕ вăл, питех те пысăк инкек тата депресси тӳсет. Унăн хăватлă тата лайăх хĕçпăшаллантарнă коммунистла Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем пур, вĕсене Советсем организациленĕ, унти хĕçпăшаллă вăйсен ретĕнче çĕр пин çын ытла шутланать.

«Пирĕн çĕршыв Пĕрлешӳллĕ Штатсем тата Франци Хĕвеланăç Германипе çĕнĕ, питех те паллă çыхăнусем тытма пуçларĕç. Пирĕн политика Хĕвеланăç Германипе хамăр тунă килĕшӳсене пĕтĕмĕшпех тăрăшса пурнăçласси пулать».

Германири федеральнăй канцлера Конрад Аденауэра «Бисмарк хыççăн Германири чи аслă государство деятелĕ тесе шутлама пулать», тенĕ Черчилль.

Черчилль малалла çапла каланă: «Эпир Советла Российăпа ыйтусене тусла йĕркелесе яма тем пек хытă тăрăшсан та, эпир Хĕвеланăç Германи тĕлĕшпе хамăр илнĕ обязательствăсене пăрахăçа кăларма пачах та шутламастпăр».

Аденауэр темиçе кунтан Англие килсе çитет. «Эпир, паллах, ăна çапла шантарса калатпăр: Хĕвеланăç Германие пĕтерсе хума парас çук тата вăл хăйĕн кун-çулĕн хуçи пулса тăма пăрахмĕ. Çакă вăл эпир тата Çурçĕр-Атлантика союзĕн организацине кĕрекен ытти çĕршывсем унпа тунă килĕшӳсенчен тухса тăрать».

Францин вăрçă тĕлĕшĕнчи лару-тăрăвĕ, паллах, англо-сакссен çĕршывĕсенче хытă пăшăрхантарма пултарать, мĕншĕн тесен çав лару-тăру французсем хӳтĕлеме тăрăшакан питех те анлă районсенче влияни парса тăрать, тенĕ Черчилль.

Франци хăйпе Индо-Китай хушшинчи тавлашăва пăхса тухма Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине пама иккĕленсе тăнине кăтартса, Черчилль çапла каланă: Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн членĕсенчен нумайăшĕн колонисем çук, вĕсем «колони тытакан çĕршывсем тĕлĕшпе уйрăм позици йышăнма» тăрăшаççĕ пулĕ. Çавăнпа та Франци ыйтăва Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине тăратма иккĕленет.

Анчах та Черчилль малалла çапла каланă: «Франци Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕпе çыхăнмасăрах хăйĕн авторитетне тата Франци Союзĕн пурнăçне сыхласа хăварасшăн пулсан, паллах, унăн хăйĕннех вăйлăрах мерăсем йышăнмалла.

Францин паянхи кун Англири пек çар системи пулсан, — икĕ çуллăх çар повинноçĕ тата çар службинче тăракан çынсене е призывниксене чикĕ леш енне, Европа тулашне ямалли право пулсан,— ман шутпа, ăна Индо-Китайри хăйĕн позицийĕсене тытса тăма çăмăлрах пулнă пулĕччĕ».

Англипе Европăри оборона пĕрлешĕвĕ хушшинчи çыхăнусем пирки асăнса, Черчилль Англи Европăри федеральнăй системăна кĕме шутламанни çинчен пĕлтернĕ. «Эпир вĕсемпе пĕрле, анчах вĕсен пайĕ пулса тăмастпăр. Пирĕн хамăрăн туслă нацисен пĕрлешĕвĕ тата импери пур». Вăл çапла хушса хунă: «Эпĕ, 50 çула яхăн вăхăт хушшинче Францин активлă тусĕ пулнă май, яланах: пирĕн кун-çулсем пĕрле çыхăнса тăраççĕ, тесе шутланă».

Агрессилле тапăннинчен хӳтĕлеме Франципе Англи пулăшĕ тесе, вăрçă пĕтнĕ хыççăн Англи пилĕк хутчен Францие шантарса сăмах панă.

Англи хăй Европăри оборона пĕрлешĕвĕн хăватне тата пĕрлĕхне çирĕплетессипе яланах интересленни çинчен пĕлтерчĕ.

«Пирĕн çĕршывпа Европăри оборона пĕрлешĕвĕ хушшинче уйрăмах тачă çыхăну пур. Эпир çак принциппа килĕшетпĕр... Политика тĕлĕшĕнчен эпир пĕтĕмĕшле интереспа çыхăннă проблемăсем пирки яланах тата тимлĕн консультацисем иртерме шутлатпăр».

Вăрçă пулас-мĕн пулсан, НАТО (Çурçĕр-Атлантика союзĕ.— Ред.) главнокомандующийĕ Риджуэй Англи дивизийĕсене стратегипе тактика хушнă пек кирек ăçта та яма пултарать.

«Европăри çар организацийĕпе пĕтĕмĕшпех пĕрлешсе тăнисĕр пуçне, эпир урăх мĕн тума пултарнă?»—тесе ыйтнă Черчилль.

Англин хăйĕн территорийĕ çинче дивизи пысăкăш пĕр соединени те çук. Пĕр çĕршыв та çавăн пек тума нихçан та хăйăман. Çакăншăн пĕр çĕршыва та çавăн пек пĕчĕк хак паман.

Балкан ыйтăвĕ çине куçса, Черчилль çапла каланă: Югослави, Греци тата Турци хушшинчи килĕшӳ союзниксен пĕтĕм оборона системине чылай вăйлатрĕ. Ку вăл Вăтам Хĕвелтухăç оборонишĕн питех те лайăх пулчĕ. Турцие НАТО держависен шутне кĕртни араб государствисем çине пысăк влияни парать.

«Эпир çапла ĕненсе тăратпăр: араб государствисем хĕвеланăçĕнчи хăйсен союзникĕсемпе тата тачăрах çыхăнса ĕçлеме тăрăшĕç, вĕсем пĕтĕмĕшле интересем енчен тата пĕр-пĕрин хăрушсăрлăхĕ тĕлĕшпе хĕвеланăçĕнчи союзникĕсемпе вумай енчен çыхăнса тăраççĕ».

Черчилль Советла Российăн позицийĕ юлашки тапхăрта улшăнни çинчен чарăнса тăнă.

Вăл çапла каланă: «Пирĕн политика çакăн пек: пирĕн лайăх ĕçе (вăл, тен, пур) чарса лартма пултаракан ĕçсемпе заявленисем тумалла мар, пирĕнпе Россия хушшинчи çыхăну лайăхланнине кăтартакан кирек мĕнле паллăна та ырламалла.

Çĕнĕ Совет правительстви туслăха палăртакан чылай ĕçсем туни пире хавхалантарчĕ».

«Çав ĕçсен тĕллевĕ ку таранччен эпир вĕсем тĕлĕшпе туса иртермен ĕçсене пĕтерсе лартасси пулнă. Çавăнпа та вĕсем çине çавăн пек ĕçсем тунипех ответлеме конкретлă майсем шыраса тупма йывăр».

Çапах та çав майсене кăтартса пама пултарас пулсан, вĕсене «правительство, паллах, пĕр тăхтаса тăмасăрах тата кăмăлласа тишкерсе тухĕ».

Пурне те йĕркелесе çитериччен Советла Российăпа нимĕн те йĕркелеме май çук тесе шутлани тĕрĕс пулмасть, тенĕ Черчилль.

«Икĕ е виçĕ йывăр ыйтăва татса пани мире юратакан кирек мĕнле çĕршывшăн та çитĕнӳ туни пулĕччĕ».

Сăмахран, Корейăра мир туни тата Австри договорне йышăнни çывăх çулсенче çыхăнусенчи йывăрлăха пĕчĕклетме май панă пулĕччĕ. Çакă вăл хăй енчен хăрушсăрлăх тата мĕнпур çĕршывсен чечекленĕвĕ валли çĕнĕ малашлăх уçса панă пулĕччĕ.

«Çавăнпа та эпĕ çапла шутлатăп: малтанах ытла та тĕплĕ план тума хатĕрленни, тĕнчен коммунистла тата коммунистла мар пайĕсене уйăрса тăракан тĕп ыйтусене пĕтĕмĕшле пĕр килĕшӳ пулăшнипе пĕрре тытăнсах татса парасса кĕтни йăнăш пулнă пулĕччĕ».

Уйрăм ыйтусене пайăн-пайăн татса парассине хакламасăр тăма юрамасть, тенĕ Черчилль.

«Мĕн чухлĕ те пулин вăхăт хушшинче кашни енĕ тепĕр енĕ йышăнма пултарайман ĕçсем мар, тепĕр енĕ йышăнма пултаракан мĕнле ĕçсем тума май пурри çинчен шухăшласа пăхсан, паллах, япăх пулмĕччĕ».

Тĕнчери политика ыйтăвĕсене йĕркелесе яма тăрăшни «Российăра, тен, чăнласах хăй тĕллĕн тата лайăх эволюцисем» пулассине чăрмантарас-мĕн пулсан, ку вăл хурлăхлă ĕç пулнă пулĕччĕ.

«Эпĕ çапла шутлатăп: çĕршыври хăшпĕр явленисем тата шухăшсем палăрмалла улшăнни çĕршыв тулашĕнчи ĕçсенчен чылай пахарах тата паллăрах.

Эпĕ питех те çакăн пек тăвасшăн: НАТО-на кĕрекен державăсен тулашри политикине палăртса панă чухне калакан сăмахсем вырăссен туйăмĕнче, тен, чăнах та пулса иртекен тарăн улшăнусене кансĕрлемелле мар тата çак туйăм вăйĕсене çухатма памалла мар. Эпир пурте вырăс халăхĕ тĕнчери ĕçсенче хăйне тивĕçлĕ паллă вырăн йышăнмалла тăвасшăн, вăл хăйĕн хăрушсăрлăхĕ пирки иккĕленмелле мар тăвасшăн.

Россия хăрушсăрлăхĕ Хĕвеланăç Европа ирĕклĕхĕпе тата хăрушсăрлăхĕпе çураçма пултарайманни çинчен калакан пысăк ыйтăва татса пама çук тенине эпĕ ĕненместĕп».

«Манăн çакна ăнлантарса парас пулать: тĕнчери ĕçсем ытла та паллă мар пулсан та тата вĕсем пăтрашса çитнĕ пулсан та, ертсе пыракан державăсем хушшинче аслă представительсен конференцийĕ вăхăта нумая ямасăр пулмалла, тесе шутлатăп эпĕ».

Çак конференцие, тенĕ Черчилль, хутшăнма кирлĕ сахал державăсемпе çынсем кăна хутшăнмалла. Çак тĕлпулу «официальнăй мар йĕркепе пулса иртмелле, вăл пуринчен ытла хупă, вăрттăн пулмалла».

Малалла Черчилль çапла каланă: «Тен, çирĕп килĕшӳ тума май килмĕ, анчах конференцие пухăннисен вĕсем этемлĕхе, вăл шутра хăйсене те туртса çурма пултаракан ĕçсенчен лайăхрах ĕçсем тума пултарнине шанса, ĕненсе тăмалла.

Эпĕ çакна çеç каласшăн: çакăн пек пулма пултарать. Çакăн пек тума тăрăшса пăхассинчен камăн та пулсан мĕншĕн хăрамалла пулнине эпĕ ăнланмастăп».

Черчилль малалла вăл хăй 1945 çулхи апрелĕн 29-мĕшĕнче Сталин патне янă телеграммăран пысăк вырăнсем илсе вуласа панă, коммунистла державăсемпе коммунистла мар державăсем хушшинче пĕр-пĕрне таччăнрах ăнланса ĕçлемелле тума чĕннĕ.

«Кун пирки эпĕ паян та çавăн чухнехи шухăшпах пурăнатăп», тенĕ вăл.

Черчилль шучĕпе Германипе Россия хушшинчи çыхăнусенче Локарно договорĕ пек договор вырăнлă пулма пултарать, вĕсем «хăйсен пĕрремĕш тĕллевĕ Европăра мире тĕреклетесси пулать, пĕтĕм этемлĕх валли мир туса хумалли хатĕр пулать» тесе шутлаççĕ.

Черчилль çапла ăнлантарса панă: 1925 çулта Локарнăра йышăннă договор «чаплă положени» çинче никĕсленсе тăрать. Вăл договор тăрăх, Германи Франци çине тапăнас пулсан, Англи французсем майлă пулать, Франци Германи çине тапăнас пулсан, Англи нимĕçсем майлă пулать.

Кунччен маларах, Европăри пысăк ыйту пулса тăракан Германи ыйтăвĕ çинче чарăнса тăрса, Черчилль çапла каланă: «Пĕрлешӳллĕ Штатсем эпир каланине итленĕ пулсан, Германипе перемири тунă хыççăн тăшман территорине оккупаци туса тăрас тĕлĕшпе тухса тăнă нумай тавлашуллă ыйтусем пирки Совет Российĕпе калаçса татăлаччен хĕвеланăçĕнчи союзниксем хăйсен çарĕсем çитнĕ чикĕсем патĕнчен каялла чакман пулĕччĕç. Германие оккупацилесси вăл тăшман территорийĕн пĕр пайĕ кăна пулнă.

Пирĕн шухăша шута илмерĕç. Çавна пула Германин пысăк районне çĕнтерӳçĕ виçĕ держава хушшинче ыйтăва пĕтĕмпе йĕркелесе çитериччен Совет Союзĕн оккупацине пачĕç».

Черчилль çапла каланă: Потсдамри конференцие Пĕрлешӳллĕ Штатсем, Англи, Франци тата Россия хутшăннă. Конференци хыççăн Сталинла Россия «хĕвеланăçĕнчи союзниксем тĕлĕшпе питех те тăшманла позици» йышăнчĕ.

«Мĕн малтан пуçласах Сталин хăйне хирĕç халĕ вилнĕ Эрнест Бевин (ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулнă лейборист) хыттăн тăнине курчĕ. Бевин вырăссен советла амбицийĕн çĕнĕ аталанăвне хирĕç демократиллĕ шухăша пĕрлештерсе пĕтĕçтерчĕ.

Юлашки сакăр çул хушшинчи трагедилле пысăк ĕçсем пĕрин хыççăн тепри йĕркипе пулса пычĕç.

Çавна пула халĕ ĕнтĕ Германи ыйтăвĕ ~~начах~~ урăхла формăпа тухса тăчĕ».

Черчилль çапла каланă: Германипе Польша хушшинчи чикĕ çинчен тăракан ыйтăва Потсдамри конференцире пĕтĕмĕшлĕ мирлĕ договор тунă чухне татса памалла, тесе каярахпа пăхса тухма хăварнă. «Халĕ ĕнтĕ, çемçен каласан, ку ыйту ун чухне пулнинчен нимĕн чухлĕ те малалла кайман».

Юлашкинчен Черчилль çапла каланă: «Хальхи тапхăрта ирĕклĕ нацисемшĕн пĕр-пĕрипе килĕштерсе ĕçлессине тата хатĕрленессине вăйсăрлатни ытла та начар ĕç пулнă пулĕччĕ. Хамăрăн оборона ĕçĕсене хамăр вăйсен пултарулăхĕн шайĕнче тытса пырассине пăрахăçлас тени вăл Европăпа Азире мир туса хурас мĕнпур ырă ĕçсене аркантарса ярас тенине пĕлтерет.

Эпир хамăр хушăра вырăнти интерессем тĕлĕшĕнчен хамăр шухăшсем тĕрлĕрен пулнă пирки пĕр-пĕрне хирĕç пыма пуçлас пулсан, хамăрăн пĕтĕмĕшлĕ вăйсене чакарас пулсан, этемлĕх пуçне килсе тухнă çĕнĕ шанчăка яланлăхах пĕтерсе лартнă пулăттăмăр, çакă вăл пĕтĕмĕшлĕ арканупа чуралăх патне кăна илсе пыма пултарать.

Пĕрлĕх, сыхăлăх, тĕрĕслĕх—акă ĕнтĕ шанчăк тытăнса тăмалли пĕртен-пĕр никĕс».

Англипе Египет хушшинчи ĕçсем пирки

ПАРИЖ, майăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин Каирти корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, майăн 13-мĕшĕнче каçхине Англи çарĕсем Суэц çывăхĕнчи Кафр-Обду ялĕнчи хресченсем çине пăшалтан пеме пуçланă. Хресченсем хушшинче аманнисем пур.

Акăлчансем ял çине пăшалтан пеме пуçласси Египет çыннисем, мусульмансен тĕн уявĕ Рамадан пуçланни çинчен пĕлтерсе, артиллерирен пушăлла харăс пенĕ хыççăн пуçланнă.

ЛОНДОН, майăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Каирти корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Египет власĕсен представителĕсем çапла каласа панă: Англи çарĕсен командующине Египетăн Суэцри губернаторĕ мусульмансен тĕн уявĕ Рамадан пуçланни çинчен пĕлтерсе артиллерирен пемелле пуласси çинчен малтанах пĕлтерсе хунă пулнă.

Франциri Наци пухăвĕн депутатсен прави тĕлĕшпе ĕçлекен комиссийĕнче

ПАРИЖ, майăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Юманите» хаçат пĕлтернĕ тăрăх ĕнер Наци пухăвĕн депутатсен прави тĕлĕшпе ĕçлекен комиссин ларăвĕ пулнă. Деголлевецсен партийĕн членĕсем коммунистсен партийĕн деятелĕсен—Дюкло, Фажон, Вийу, Гюйо юлташсен депутат прависене пĕтермелле тăвасси çинчен кун йĕркине ыйту кĕртме сĕннĕ. Комисси членĕсем — коммунистсемпе социалистсем çавна хирĕç тăнă. Комисси унччен маларах çак ыйтăва сӳтсе явассине асăннă депутатсем пирки парламент решени йышăниччен тепĕр вăхăта хăварнă пулнă.

Деголлевецсен сĕнĕвне комисси членĕсен ытларахăшĕ сирсе пăрахнă.

Çăмăл атлетсен ăмăртăвĕ

Тутар тата Чăваш АССР-ĕсен командисем малта пыраççĕ

Шупашкарти «Молния» спорт обществи стадионĕнче майăн 14-мĕшĕнче каçхине 6 сехетре Тутар, Пушкăрт, Удмурт, Чăваш, Мордва тата Мари АССР-ĕсенчи çăмăл атлетсен ăмăртăвне килнĕ физкультурниксемпе физкультурницăсен парачĕ пулчĕ. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ М. Андреев юлташ парад участникĕсене саламласа, вĕсене ăмăртура çĕнĕ ӳсĕмсем тума чĕнчĕ.

Главнăй судья Афанасьев юлташ ăмăрту уçăлни çинчен пĕлтерчĕ. Ун хыççăн пионерсем ăмăртăва хутшăнакан спортсменсене кашнине чечек çыххисем парĕç.

Чи пултарулă спортсменсем — Тутар АССР-ĕнчи Колчинпа Забарская тата Чăваш АССР-ĕнчи Бикчурин çăмăл атлетсен ăмăртăвĕн ялавне мачта çине хăпартма тивĕçлĕ пулчĕç. Вĕсем ялава хăпартнă вăхăтра оркестр Совет Союзĕн Гимнне калать.

Парад хыççăн финала тухнă хĕрарăмсем тата арçынсем 100 метр чупрĕç. Хĕрарăмсенчен Комсомольски районĕнчи çамрăк колхозница Ира Антонова çак дистанцие 13,4 секундра чупса тухса, пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Ю. Люкшина (Тутар АССР-ĕ) иккĕмĕш вырăна, А. Карабашкина (Мари АССР-ĕ) виççĕмĕш вырăна тухрĕç.

Арçынсенчен 100 метр чупма финала çаксем тухнăччĕ: Ишлей районĕнчи учитель С. Скворцов, Л. Павлов (Тутар АССР-ĕнчен), Х. Гадельшин (Пушкăрт АССР-ĕнчен) тата Н. Аникин (Мордва АССР-ĕнчен). Финалра Л. Павлов 100 метра 11,8 секундра чупса тухса, пĕрремĕш вырăн, Х. Гадельшин (12 секунд) иккĕмĕш вырăн, С. Скворцов (12,1 секунд) виççĕмĕш вырăн йышăнчĕç.

Каярахпа хĕрарăмсем 400 метр чупрĕç. Çак ăмăртура пирĕн республика спортсменĕсем лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç. Чăваш АССР-ĕн рекордсменки И. Антонова 400 метра 1 минут та 2,6 секундра чупса тухса, пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Ку дистанцири ăмăртура иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене те Чăваш АССР-ĕн спортсменкисем Л. Емельяновăпа Е. Мишенькина йышăнчĕç.

1.500 метр хушшине чупса тухас енĕпе пулнă ăмăртăва 15 спортсмен хутшăнчĕ. Çак ăмăртура та пирĕн спортсменсем хамăр республика чысĕшĕн хытă тăрăшрĕç. Пĕрремĕш вырăна РСФСР-ти «Колхозник» спорт обществин чемпионĕпе рекордсменĕ Бикчурин, иккĕмĕш вырăна Улангин (Чăваш АССР-ĕнчен), виççĕмĕш вырăна Гареев (Пушкăрт АССР-ĕнчен) йышăнчĕç. Тутар АССР-ĕн представителĕ Скуридин тăваттăмĕш вырăна тухрĕ.

Чупса пырса сиксе каçас енĕпе иртнернĕ ăмăртура арçынсенчен Тутар АССР-ĕн представителĕ Вяселев мала тухрĕ. Вăл 1 метр та 65 сантиметр çӳлĕш урлă сиксе каçрĕ. Çак ăмăртура пирĕн республика спортсменĕ Матвеев 1 метр та 40 сантиметр çӳллĕшне çеç сиксе каçрĕ.

Етре тĕксе ывăтас енĕпе Мари АССР-ĕн командинчи спортсмен Бобков мала тухрĕ. Вăл етрене 12 метр та 63 сантиметр тăршшĕ тĕксе ывăтма пултарчĕ. Чăваш АССР-ĕн представителĕ Камалтдинов иккĕмĕш вырăн, Тутар АССР-ĕн представителĕ Кириллов виççĕмĕш вырăн йышăнчĕç.

Хĕрарăмсем чупса пырса инçете сикмелли ăмăртура Чăваш АССР-ĕн спортсменки Боровкова, 4 метр та 60 сантиметр тăршшĕ сиксе, мала тухрĕ. Иккĕмĕш вырăна Безродная (Удмурт АССР-ĕнчен), виççĕмĕш вырăна Люкшина (Тутар АССР-ĕнчен) йышăнчĕç.

Çапла вара, пĕрремĕш кун иртнернĕ ăмăртусен результачĕсем тăрăх, Тутар АССР-ĕнчи çăмăл атлетсен команди, 6.756 очко пухса, пĕрремĕш вырăна, Чăваш АССР-ĕн 1-мĕш команди, 6.356 очко пухса, иккĕмĕш вырăна, Пушкăрт АССР-ĕн команди виççĕмĕш вырăна, Мордва АССР-ĕн команди тăваттăмĕш вырăна, Мари АССР-ĕн команди пиллĕкмĕш вырăна, Удмурт АССР-ĕн команди улттăмĕш вырăна тухрĕç.

Ултă автономиллĕ республикăсенчи çăмăл атлетсен ăмăртăвĕпе пĕрле çав республикăсен ялсенчи спортсменĕсем енĕпе те ăмăрту пырать. Кунта ăмăртăвăн пĕрремĕш кунĕнчи результачĕсем çакăн пек: Чăваш АССР-ĕн пĕрремĕш команди 3.723 очко пухса пĕрремĕш вырăн, Тутар АССР-ĕн команди 2.378 очко пухса иккĕмĕш вырăн, Мордва АССР-ĕн команди 1.972 очко пухса виççĕмĕш вырăн йышăнчĕç. Пирĕн республикăн иккĕмĕш команди ялсенчи спортсменсем енĕпе 2.657 очко пухрĕ.

Тепĕр кунне ирхине арçынсем 10 километр ăмăртса утрĕç. Çак дистанцие Пушкăрт АССР-ĕн представителĕ Соколов, 51 минут та 46,1 секундра утса тухса, пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Тутар АССР-ĕн спортсменĕ Алешин иккĕмĕш вырăн, Мордва АССР-ĕн спортсменĕ Коровин виççĕмĕш вырăн йышăнчĕç. Чăваш АССР-ĕн представителĕ Улангин кая юлчĕ.

Ун хыççăн арçынсем 110 метр, хĕрарăмсем 80 метр хушшинчи барьерсем урлă сиксе каçса чупмалли ăмăртăва хутшăнчĕç. Арçынсенчен Пушкăрт АССР-ĕн представителĕ Быковский тата Тутар АССР представителĕ Вяселев, хĕрарăмсенчен Тутар АССР-ĕн рекордсменки Орлова, Чăваш АССР спортсменкисем Токаревăпа Емельянова лайăх тĕслĕх кăтартрĕç.

Диск ывăтмалли ăмăртура Тутар АССР-ĕн представителĕ Н. Колчин хăйсен республикин çĕнĕ рекордне турĕ. Вăл диска 45 метр та 80 сантиметр тăршшĕ ывăтрĕ.

Хĕрарăмсем ирхине етре тĕксе ывăтас енĕпе ăмăртрĕç. Пĕрремĕш вырăн Воронцова (Пушкăрт АССР-ĕнчен) йышăнчĕ. Вăл етрене 10 метр та 93 сантиметр тăршшĕ тĕксе ывăтрĕ. Иккĕмĕш вырăна Забарская (Тутар АССР-ĕнчен), виççĕмĕш вырăна Свистова (Мордва АССР-ĕнчен), тухрĕç. Чăваш АССР-ĕн спортсменки Токарева улттăмĕш вырăна юлчĕ.

Каçхине хĕрарăмсем 200 метр хушшине, арçынсем 400 метр хушшине ăмăртса чупрĕç. Хĕрарăмсенчен пирĕн республика спортсменкисем Антоновăпа Мишенькина, Тутар АССР-ĕн представителĕ Орлова мала тухрĕç. Арçынсенчен Павлов (Тутар АССР-ĕнчен), Бикчурин (Чăваш АССР-ĕнчен) тата Ожигин (Пушкăрт АССР-ĕнчен) малти виçĕ вырăна йышăнчĕç. Арçынсем, çавăн пекех, чупса пырса инçете сиксе енĕпе те ăмăртрĕç. Тутар АССР-ĕн спортсменĕ Кириллов, 6 метр та 14 сантиметр тăршшĕ сиксе, пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Чăваш АССР спортсменĕсем — Бортницкий, 5 метр та 97 сантиметр тăршшĕ сиксе, иккĕмĕш вырăн, Яшмейкин, 5 метр та 92 сантиметр тăршшĕ сиксе, виççĕмĕш вырăн йышăнчĕç.

Малтанхи результатсем тăрăх çакна каламалла: Тутар АССР-ĕн спортсменĕсем, ăмăртăва тăрăшса хатĕрленни курăнать вĕсем ăмăртусенче лайăх результатсем кăтартаççĕ. Паллах, пирĕн республикăн сборнăй командисенчи спортсменсем те ултă республикăсен сборнăй командисем хушшинче малти вырăнсене йышăнассишĕн вăйлă кĕрешеççĕ, малтанхи кунхи ăмăртусенче уйрăмах Антонова, Бикчурин, Токарева, Боровкова тата ытти спортсменсем те хамăр республика чысĕшĕн кĕрешсе, хăйсен пултарулăхне лайăх кăтартрĕç.

Ĕнер ирхине тата каçхине пулнă ăмăртусенче спортсменсем харпăр хăй республикисен командисене мала кăларассишĕн хытă тăрăшса ăмăртрĕç.

Ăмăртусем вĕçленнĕ хыççăн, спортсменсен парачĕ пулчĕ. Çакăнпа автономиллĕ ултă республикăсенчи çăмăл атлетсен ăмăртăвĕ вĕçленчĕ.

Чăваш академи театрĕн гастролĕсем

Çак кунсенче Чăваш академи драма театрĕн икĕ бригади кӳршĕри республикăсемпе облаçсене гастроле тухса кайрĕç.

Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ Л. Родионов ертсе пыракан бригада Куйбышев облаçне кайрĕ. Çуллахи вăхăтра артистсен бригади Пушкăртпа Тутар республикисенчи тата Ульяновск облаçĕнчи чăваш ялĕсенче пулать. Унта çак бригада Украина халăхĕн аслă поэчĕ Тарас Шевченко çырнă «Назар Стодоля» спектакле тата А. Эсхелĕн «Виçĕ туй» комедине лартса парать. Бригада составĕнче РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ тата Чăваш АССР халăх артисчĕ Б. Алексеев, Чăваш АССР халăх артистки О. Ырзем, республикăн тава тивĕçлĕ артисчĕсем Б. Марков, В. Родионов, Р. Ананьева, Е. Шорникова, артистсем—Р. Филиппов, Н. Степанов, В. Кузьмина, Т. Егорова, Д. Столярова тата ыттисем те.

Иккĕмĕш бригадăна Чăваш АССР халăх артисчĕ А. Ургалкин ертсе пырать. Ку бригада Н. Осипов çырнă «Айдар» спектакльпе хамăр республикăри инçетри районсенче пулать. Кунсăр пуçне, артистсен бригади Тутар республикинчи тата Ульяновск облаçĕнчи чăваш ялĕсенче спектакльсем лартать. Бригада коллективне Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕсем—И. Молодов, Е. Никитин, Л. Семенов, Г. Фадеев, А. Долгова, А. Мащтанова, артистсем—Н. Виноградов, А. Бубнов, И. Алексеев, М. Иванова, Е. Степанова, М. Алексеева тата ыттисем те кĕреççĕ.

Театр коллективĕ гастрольре август уйăхĕччен пулать.

Район центрне илемлетеççĕ

ПЕРВОМАЙСКИ. Кăçал район центрне юсаса илемлетес тĕлĕшпе чылай ĕçлеççĕ. Иртнĕ эрнере тĕрлĕ учрежденисен çурчĕсем тавра 500 метр ытла илемлĕ карта тытрĕç, палисадниксем турĕç. Кăçал çуркунне хитре йывăçсем вунă пин тĕп лартса хăварчĕç. Район центрне йывăçсем лартса илемлетес тĕлĕшпе уйрăммăнах райсовет исполкомĕн ялхуçалăх пайĕнче тата çыхăну кантурĕнче ĕçлекенсем тăрăшса ĕçлерĕç.

Çак кунсенче кивĕ тротуарсене юсанă, Кăçал çĕнĕрен тротуарсем тума палăртнă.

А. ТУКМАКОВ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — майăн 17-мĕшĕнче (кăнтăрла та, каçхине те) тата майăн 20-мĕшĕпе 21-мĕшĕнче çĕнĕ спектакль **«Вей, ветерок»**. Спектакль лартнă чухне филармонин симфониллĕ оркестрĕ вылять. Кăнтăрлахи спектакль 12 сехетре, каçхине—20 сехет те 30 минутра пуçланать.

КИНО

«РОДИНА» — майăн 17-мĕшĕнче 10, 12, 14 сехетре пуçланакан сеанссенче илемлĕ фильм **«Мужество»**, каçхи сеанссенче — фильм-спектакль **«Лес»**, 16 тата 20 сехетре пуçланакан сеанссенче — пĕрремĕш сери, 18 сехет те 15 минутра тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче — иккĕмĕш сери. Майăн 18-мĕшĕнче пур сеанссенче те илемлĕ çĕнĕ фильм **«Адмирал Ушаков»**.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00546 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.